Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

Иĕ №-рĕ 10 пус. 19-мĕш çул тухать.

1937 ДЕКАБĔР 18 ШАМАТКУН 280 (4802)-мĕш №

Чăваш Коммунĕ

ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Тĕпĕçтăвкомĕн хаçачĕ

Редакципе кантур адресĕ: Город Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати

ТЕЛЕФОНСЕМ: Редакторăн 0—67, Ред. заместителĕн 0—88, Редакци секретарĕн 4—40, Дежурнăйăн 6—23

Сывă пултăр ССР Сойузĕн Аслă Совечĕ!

Совет влаçĕн пĕтĕм çулĕсем хушшинче пулса иртнĕ политикăлă кампанисенчен чи пысăк та кирлĕ, чи массăлă кампани — ССР Сойузĕн Аслă Совет суйлавĕ — пĕтрĕ.

Декабрĕн 12-мĕш кунĕ суйлав кампанин историнче нихăçан курман икĕ чаплă уйăха пите пахан вĕçлесе çитернĕ кун пулса тăчĕ. Аслă Совет суйлавĕ мĕнле пынине ку кун пĕтĕм тĕнче пăхса тăчĕ — туссем хĕпĕртесе те савăнса, тăшмансем — шăлĕсене шатăрттатса тата вăйсăр тарăхупа.

Пирĕн аслă çĕршывăн пĕтĕм талкăшĕнче, хуласемпе йалсенче, инçетри çурçĕрпе хĕвеллĕ кăнтăрта, хĕлкаçакан вырăнсенче тата куçса çӳрекенсем пурăннă çĕрте — совет çыннисем пурăнакан вырăнсенче пур çĕрте те, Совет Сойузĕнчи 137.185 суйлав участкинче пуринче те декабрĕн 12-мĕш кунĕ уйрăмăнах чаплă уйав пулса иртрĕ. Ирĕклĕ те хăватлă аслă совет халăхĕ государствă влаçĕн аслă органне суйларĕ.

Суйлав, халăх большевиксен партине вĕçĕмсĕр шаннă палăпа иртрĕ, вăл парти йалан хăй халăхĕн пурнăçĕпе пурăннă, халь те халăх пурнăçĕпе пурăнать, вăл партин халăх интересĕсемсĕр — унăн телейĕсĕр тата аван пурнăçĕсĕр пуçне, урăх интерессем пулман, çук, пулмаст те. ССР Сойузĕн Аслă Совет суйлавĕнче коммунисссем партире тăманнисемпе блок туса, сойуз туса тухрĕç. Коммунисссемпе партире тăманнисен блокĕ чаплă çĕнтерӳ турĕ!

Пĕтĕм халăх ирĕкĕпе пĕррремĕш депутата мĕн пур ĕçлĕ етемлĕхĕн çулпуçĕ, тусĕ тата учителĕ — аслă Сталин йулташ суйланнă. Суйланнисен шутĕнче — Сталинăн чи çывăх соратникĕсем, унăн чунтан-чĕререн тăрăшакан тӳрĕ ученикĕсем, партипе правительствă руководителĕсем. ССР Сойузĕн Аслă Советне промышленнăçри йатлă стахановецсем, колхоз ĕçĕн геройĕсем, пĕтĕм тĕнчипе паллă ученăйсем, Хĕрлĕ Çарăн мухтавлă командирĕсем, пирĕн ачасен чи лайăх учителĕсем — пĕр сăмăхпа каласан, чи малта пыракан çынсем, совет тăван çĕршывăн чечекĕ суйланнă. Пĕтĕм 1.143 суйлав округĕн депутачĕсем коммунисссемпе партире тăманнисен блок, сойуз кандидачĕсем пулнă.

Çакăн пек суйлава тата çавăн пек пĕр шухăшлă пулса сасăланине тĕнче нихçан та курман-ха. Декабрĕн 12-мĕш кунĕнче, Совет халăхĕ хăйĕн тăван çĕршывне, хăйĕн большевикла партине, хăйĕн çулпуçне Сталин йултапа мĕнле хытă йуратнине туйман çын совет çĕршывĕнче çук.

ССР Сойузĕн Аслă Совет суйлавне суйлавçăсем 96,8 процент хутшăннă. Ку ĕнтĕ, ССР Сойузĕн пур граждăнĕсем те тенĕ пекех, Ленин — Сталин партийĕпе Совет влаçĕ чĕннипе, суйлав урнисем патне пыни пулать. Ку ĕнтĕ, декабрĕн 12-мĕшĕнче ССР Сойузĕн пĕтĕм халăхĕ хăйсен сасĕсене коммунисссемпе партире тăманнисен никам çĕнтерейми Сталинла блока, сойуза пани пулать.

Совет çĕршывĕнчи çынсем кандидатсемшĕн сасăланă пек пĕр шухăшлăх нимĕнле капиталисăмла çĕршывра та пулма пултармаст. Суйлава пурте пынă! Пĕрлĕхлĕ блок кандидачĕсемшĕн кар тăрса сасăланă! Хăйсен буржуалă демократине мухтаса пĕтернĕ Англире йулашки парламент суйлавне (1935 çул) суйлавçăсем 71,9 проц. çеç хутшăннă. Хамăрпа кӳршĕри Польшă парламент суйлавĕн примерĕ тата та тĕлĕнмелерех, — унта 1935 çулта [illegible] суйлавне суйлавçăсем çурри те хутшăнман!

Унта, пирĕн Сойузăн чикĕ тулашĕнче, капиталиссем, банкирсем, помещиксем суйлавçăсене хăйсемшĕн сасăлама укçапарса çавăраççĕ, вĕсене хĕсеççĕ, хăратаççĕ, вĕсене хирĕç террор тăваççĕ. „Пирĕн патăрта, — тенĕ Сталин йул., — пирĕн çĕршывра, йăлтах урăхла, суйлавсем начах урăх лару-тăрура иртеççĕ. Пирĕн патăрта капиталиссем çук, помещиксем çук, çапла ĕнтĕ пурлăхлă классем пурлăхсăррисене хĕсни çук. Пирĕн патăрта суйлавсем рабочисем, хресченсем, интеллигенци пĕр пулса ĕçленĕ лару-тăрура, вĕсем пĕр-пĕрне шанса тăнă лару-тăрура, ейĕ калăттăм, пĕр-пĕрипе туслă пурăнакан лару-тăрура пулса иртеççĕ, мĕншĕн тесен пирĕн патăрта капиталиссем çук, помещиксем çук, експлоатаци çук, халăх ирĕкне пăсас тесе хĕсме, пăлах, никам та çук".

ССР Сойузĕн Аслă Совет суйлавĕ хăватлă совет халăхĕн пĕрлĕхне тата организацилĕхне пĕтĕм тĕнчене кăтартрĕ. Декабрĕн 12-мĕш кунĕнче пĕрлĕхлĕ, Ленин — Сталин партин çапăçуллă революцилĕ йалавĕсем айĕнче пĕтĕçнĕ совет халăхĕ мĕнле вăйлине пĕтĕм тĕнче курчĕ. Ку куна империалиссем, фашиссем йалан лăхах астуса тăччăр! Вĕсем Октябĕрти Социалисăмла аслă революци çапăçăвĕсем илнисем çине кăшт килсе ура пусма хăтланасанах, коммунисссемпе партире тăманнисен, пирĕн пĕтĕм халăхăн пĕрлĕхлĕ сталинла блок вăйĕ çине çапăнса тĕппех саланассине астуччăр!

Декабрĕн 12-мĕшĕ Сталинла Социалисăмла Конституци чаплăн çĕнтернĕ кун, пĕтĕм етемлĕхĕн асĕнче социалисăм çĕршывĕнчи нумай йышлă пĕтĕм националĕçсен нихăçан манмала мар пĕрлĕхне туслăхне ĕнентерекен свидетелствă пек йулать. Вырăссем, украинцăсемпе белорусем, азербайджанцăсем, грузинсем, армйансемпе туркменсем, узбексемпе таджиксем, казахсемпе киргизсем — Совет Сойузĕнчи мĕн пур халăхсем, граждăнла пысăк тивĕçне пурнăçа кĕртсе, суйлава тухрĕç те хăйсен сасĕсене коммунисссемпе партире тăманнисен сталинла блокне пачĕç.

Совет государствин аслă органне суйланă. Халăх унта хăйсен депутачĕсене йарса, вĕсене пысăк ĕç шанса пачĕ. Анчах совет çĕршывĕнче суйлавçăсем государствă управленине хутшăнни кунпах пĕтмест. Сталин йултапăн чаплă каланисем хыççăн, совет çĕршывĕнчи халăхсем хăйсем суйланă депутатсем мĕнле ĕçленине сивĕччĕн пăхса тĕрĕслеççĕ.

Совет Сойузĕнчи халăхсем хăйсем суйланă депутатсенчен вĕсем хăйсен пĕтĕм ĕçĕсенче ĕççыннисен аслă учителĕсем — Ленин тата Сталин примерĕсене илме, вĕсем примерĕпе хăйĕн халăхне хытă йуратма, çапăçура нимрен те хăрами пулма, халăх тăшманĕсем ширки пĕр хĕрхенӳсĕр пулма, пултарулă, тӳрĕ пулма, ССР Сойузĕн Аслă Совет депутачĕсене построй йаланах Ленин — Сталин сăнарлă политикăлă деятелсен вырăнĕнче тăма ыйтаççĕ.

Сывă пултăр ССР Сойузĕн Аслă Совечĕ!

Сывă пултăр халăхсен пĕррремĕш депутачĕ — пирĕн йуратнă Сталин йулташ!

Коммунисссемпе партире тăманнисен никам çĕнтерейми Сталинла блокăн демонстрацийĕ

ССР Сойузĕн Аслă Совет суйлавĕнче коммунисссемпе партире тăманнисен Сталинла блок чаплă çĕнтерӳ туни пĕтĕм совет çĕршывне пысăк хаваслăхпа çеклентерчĕ.

Хĕрлĕ столицăри ĕççыннисем коммунисссемпе партире тăманнисен блок çĕнтерӳне декабрĕн 15-мĕшĕнче пите пысăк уйавлă демонстраципе паллă тунă.

16 сехет те 30 минутра хăватлă прожекторсен çуттипе çутатнă аслă Хĕрлĕ площăдпе демонстрантсен пĕррремĕш колоннисем кĕнĕ. Вĕсем хушшинче — Столицăри Сталинский суйлав округĕнчи ĕççыннисем. Вĕсене социалисăм çĕршывĕн Аслă Советне депутата суйлама пĕтĕм халăхпа палартнă пĕррремĕш кандидатшăн — тăван тата йуратнă Сталиншăн сасăлама пысăкран та пысăк телей тивнĕ.

Мавзолейĕн сулахай йенче Молотов, Калинин, Хрушчев, Димитров, Булганин, Буденный, Шкирйатов йулташсем пулнă.

Вăрăм хĕрлĕ хăмачсем тата плакатсем çинче — Иосиф Виссарионович Сталина, унăн чи çывăх соратникĕсене тата питомцисене — ССР Сойузĕн Аслă Совет депутачĕсене саламлакан çулăмлă сăмахсем. Пысăк халăх тинесĕ çинче — партипе правительствăн йуратнă руководителĕсен пиншер портречĕсем.

Демонстрантсен колоннисем хушшинчен Совет çĕршывĕн тăшманĕсен адресĕпе хаваррăн асăрхаттаракан сасăсем йанраса тухаççĕ:

„Тĕп пултăр фашисăм! Халăх тăшманĕсене — троцкисла-бухаринла фашисла шпионсене тата диверсантсене тĕпе-тымарĕпех тăпалтарар!"

Хĕрлĕ площăд витĕр пултарулă, хĕпĕртесе хавхаланнă халăх йухамĕ виçĕ сехет хушши татти-сыпписĕр шунă.

Мĕлйун ытла Мускав ĕççыннисем ССР Сойузĕн Аслă Советне тăвакан саламласа, хăйсем большевикла партине, унăн Сталинла Тĕп Комитетне тата халăхсен чи аслă çулпуçне Сталин йулташа чĕререн йуратнине демонстрацилесе Хĕрлĕ площăд витĕр тухнă.

* * *

Декабрĕн 15-мĕшĕнче Ленинград ĕççыннисен демонстрацийĕ икĕ сехет ытла тăсалнă. Унта 750 пин çын хутшăннă. Демонстрантсем трибунă çинче тăракан, çĕршывăн аслă органне хăйсем суйланă депутатсене — Жданов, Угаров, Петровский, Сметанин тата ытти йулташсене хĕрӳллĕн саламланă.

Çавнашкалах тата Кийевра, Минскра, Сталинора, Одессăра, Днепропетровскра, Смоленскра тата çĕршывăн ытти хулисенче те нумай пин çынлă демонстрацисем пулса иртнĕ.

Харьковра декабрĕн 15-мĕшĕнче пулса иртнĕ хулари митингра 165 пин ĕççынни пулнă. (ТАСС).

Йутçĕршывсенчи пичет ССР Сойузĕн Аслă Совет суйлавĕ çинчен

Çĕнтернĕ социалисăмăн Сталинла Конституцийĕ тăрăх пулса иртнĕ ССР Сойузĕн Аслă Совет суйлавĕ пĕтĕм тенчери чи йышлă массăсене пите тимлĕн çаврăнтарса пăхтаракан историлĕ пысăк ĕç пулса тăрать.

Франци пичечĕ Аслă Совет суйлавĕ çинчен анлăн çутатать.

Франци хаçачĕсем Совет Сойузĕнче суйлавçăсем пур çĕрте те калама çук ак ивлă пулнине, суйлав техникине питĕ лайăх организациленине паллă тăваççĕ.

Франци компартин тĕп органĕ „Йуманите" хаçат çапла çырать: „Совет Сойузĕн халăхесем декабрĕн 12-мĕшĕнчи суйлава чăн-чăн ирĕклĕх праçникĕ туса хучĕç. Совет халăхĕ хăйĕн телейне, хăйĕн никама пăхăнманлăхне, хăйĕн ирĕкне большевиксен партийĕ, Ленин тата Сталин туса панине пĕлет. Вăл социалисăмшăн, коммунисăмшăн сасăлать. Декабрĕн 12-мĕшĕнчи суйлав Совет Сойузĕнчи халăхсен аслă семйин пĕрлĕхне, большевиксен партийĕ тавра, совет правительстви тавра пĕтĕçнĕ 170 мĕлйун çын пĕрлĕхне ĕнентерекен çĕнĕ свидетелствă пулса тăрать".

Австри хаçачĕсем уйрăмăнах ССР Сойузĕн Аслă Совет суйлавĕнче коммунисссемпе партире тăманнисен суйлав блокĕн ыйтăвĕ çинчен çыраççĕ. „Винер цейтунг" йатлă пысăк хаçат „коммунисссемпе партире тăманнисен суйлав блокĕн идейине массă пысăк хастарлăхпа йышăннă", тесе çырать.

ССР Сойузĕн Аслă Совет суйлавĕ çинчен пĕлтернисене Америкăн пысăк хаçачĕсем пурте курăнмала вырăна пичетленĕ. (ТАСС).

Семенăв йулташăн рекорчĕсем

ÇЕМĔРЛЕ (Хамăр корр.) Комбинатри столярнăй цехра ĕçлекен столяр Петр Семенов Аслă Совета суйламали куна нормăна 150 процентран кайа мар тултарса ĕçлеме тытăннипе кĕтсе илме пулнипе ылăмшипех пурнăçларĕ.

Декабрĕн 7-мĕшĕнче вăл нормăна 373 процент, 8-мĕшĕнче — 390 процент тултарса нихçан туман рекордсем турĕ.

Декабрĕн малтанхи вунăкун хушшинче Семенов нормăна 250 процент ытла тултарнă.

Сталин — пĕтĕм совет халăхĕн пĕрлĕх символĕ

Аслă Совет суйлавĕнче коммунисссемпе партире тăманнисен блокĕ чаплăн çĕнтернине ССР Сойузĕнчи ĕççыннисем хĕрӳллĕн саламлаççĕ.

ССР Сойузĕн Аслă Советне суйланнин итогĕсем çинчен пĕлсен, аслă Совет Сойузĕнчи мĕлйун-мĕлйун ĕççыннисен хаваслăхĕ вĕçĕ-хĕррисĕр çĕкленсе кайрĕ. Депутатсен спискинче ĕççыннисем йуратнă çулпуçĕн, тусĕн тата учителĕн, ССР Сойузĕн Аслă Совечĕн пĕррремĕш депутачĕн Сталин йулташăн йатне, мухтавлă сталинла соратниксен — Молотов, Калинин, Ворошилов, Каганович, Жданов, Йежов йулташсен йачĕсене, партипе социалисăм çĕршывĕн чи лайăх ывăлĕсен йачĕсене мухтавлă та хавасла туйăмпа вуласа тухрĕç.

Пĕтĕм çĕршыв тăрăх калама çук пысăк хавхаланупа нумай çынлă митингсем пулса иртеççĕ.

ССР Сойузĕн Аслă Советне суйланă чухне коммунисссемпе партире тăманнисен блокĕ пĕтĕмпех çĕнтерни Мускаври Сталинский суйлав округĕнчи суйлавçăсене çав тери çĕклентерсе йанă. Куйбышев йачĕпе тăракан електрозаводра, Фрунзе йачĕпе, Лепсе йачĕпе тăракан заводсенче, Л. М. Каганович йачĕпе тăракан прожектор заводĕнче тата ыттисенче те массăлă митингсем пысăк çĕкленӳпе пулса иртнĕ.

Куйбышев йачĕпе тăракан електрозавод коллективĕ Сталин йулташ кандидатурине ССР Сойузĕн Аслă Советне депутата суйлама чи малтан тăратнă, çав заводри рабочисемпе служăщисен митингĕсенче 4.500 çын пулнă. Пурте пĕр шухăшлă пулса йышăннă резолюцире çапла çырнă:

„Сталинский округĕнчи суйлавçăсем телейлĕ пулчĕç, ССР Сойузĕн Аслă Советне депутата суйламали бюллетенсене Сталин йулташ йачĕпе пама вĕсем çине чыс килсе тухрĕ. Сталин — пирĕн аслă çулпуç тата учител, ăна Аслă Советăн пĕррремĕш депутачĕ пулма пĕтĕм халăхпа суйланă, мĕншĕн тесен Сталин — пирĕн кĕрешӳпе çĕнтерӳсен йалавĕ. Суйлавçăсем пĕтĕм çĕршывĕпех суйлава питĕ нумайăн пыни, большевиксен партийĕ тавра тата коммунисссемпе партире тăманнисен блокĕ тавра халăх халиччен курманла çирĕп пĕтĕçни пирĕн политикăлă тата моралле пĕрлĕхе никам пăсма пултарайманнине, епĕр большевиксен партине тата аслă Сталина пысăккăн йуратнине, епĕр халăх тăшманĕсене тарăхса курайманнине, епĕр Ленин — Сталин йалавĕ айне тăрса коммунисăм татăкллăн çĕнтеричченех кĕрешме хатĕр тăнине пĕтĕм тĕнчене кăтартса пачĕç. Епĕр хамăр тăван çĕршыва чечеклентерессишĕн, унăн оборонă пултарулăхне тĕреклентерессишĕн кĕрешес ирĕклĕхе пĕр минутлăха та хавшатмăпăр тесе, халăх тăшманĕсене пĕтерсе хурас ирĕклĕхе хавшатмăпăр теве тупа тăватпăр.

Большевикла парти йертсе пынипе, Сталин йулташ йертсе пынипе епĕр коммунисăмлă обществăн тӳписене çĕнсе илме малала кайатпăр".

Советсен çĕршывĕнчи ĕççыннисем митингсенче тăван большевикла партине, халăхсен аслă çулпуçне Сталин йулташа хăйсен пĕтĕм вăйне коммунисссемпе партире тăманнисен никам çĕнтерейми Сталинла блокне малала тĕреклетсе пынă çĕре пама пулса ĕнентереççĕ. (ТАСС).

Шупашкарти митинг

Декабрĕн 17-мĕшĕ. Шăп 4 сехетре Шупашкар хулинче рабочисемпе служăщисен пысăк митингĕ пуханса çитрĕ. Коммунисссемпе партире тăманнисен блокĕ çĕнтерӳвĕн мухтавлă праçникне уйавлас майпа пуханчĕç вĕсем.

Пайан пирĕн чи савăнăçлă, чи пысăк уйав. Пайан епĕр хамăрăн ĕмĕтсене, ăстăнри шухăшсене пурнăçа кĕртнине, хамăрăн малашнехи телейллĕхĕн çирĕплĕхĕне хăйулăхне чыслатпăр. Ку кун — пирĕн ĕмĕр манми мухтавлă кун.

...Хĕрлĕ площĕдре тĕнчери ĕçхалăхĕн чи çывăх йуратнă çынсем, пирĕн депутатсем: Сталин, Молотов, Калинин, Ворошилов, Жданов, Йежов портречĕсемпе, плакатсемпе, лозунгсемпе, хĕрлĕ йалавсемпе капăрланнă колоннăсенче нумай пин çын тăраççĕ. Колоннăсем хушшинче хуткупăс сасси йанрать. Унта тапă-йурă.

Митинга ПСК(б)П хула комитет секретарĕ Смирнов йулташ уçса кĕскен сăмах каласа уçрĕ. Аслă Советăн пĕррремĕш депутачĕн, йуратнă çулпуç Сталин йатне асăннине митинга пуханнă халăх пĕр харăссăн „Урра" кăшкăрнипе саламлать.

Микрофон умне Аслă Совет депутачĕ — Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председателĕ **Спасов** йулташ тухать.

— Йулташсем, пилĕк кун кайарах пĕтĕм совет халăхĕ коммунисссемпе партире тăманнисен блокĕ тăратнă кандидатсемшĕн сасăларĕ. Вăл кандидатсемшĕн сасăласа ĕççыннисем хăйсем коммунисссен партийĕ тавра çирĕппĕн пĕтĕçнине, Сталин йулташа йуратнине кăтартрĕç **(Алă çупаççĕ)**.

Епĕр, есĕр суйланă депутатсем, хамăр çине халăх хунă шанчăка пурнăçа кĕртессишĕн, тивĕçре тытассишĕн пĕтĕм вăйа, пултарулăха хурса кĕрешме пулатпăр.

Сывă пултăр Сталин!

Сывă пултăр ССР Сойузĕн Аслă Совечĕ!, — тесе пĕтерет хăйĕн сăмахне Спасов йулташ.

— Йулташсем, Мускав хулинчи Сталински суйлав округĕнчи суйлавçăсен суйлав умĕнхи канашлуĕнче Сталин йулташ ССР Сойузĕн Аслă Совет депутачĕсен мĕнле ĕçлемели çинчен питех те уççăн каласа пачĕ, — тет Аслă Совет депутачĕ — Чăваш АССР Тĕпĕçтăвком председателĕ З. А. Андрейева йулташ. — Ылĕ Сталин сăмахĕсене пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе пĕтĕм вăй-хала хурса ĕçлеме пулатăп.

Андрейева йулташ хăйĕн сăмахне, Сывă пултăр пирĕн пĕррремĕш депутат Сталин йулташ, тесе пĕтерет. Халăх нумайччен алă çупса, „урра" кăшкăрса саламлать.

Ун хыççăн спирт заводĕнчи стахановка Чернова йулташ сăмах калать. Вăл ку суйлавра хăйĕн ĕмĕчĕ, шухăшĕсем пурнăçа кĕни çинчен каласа, Аслă Советăн пĕррремĕш депутатне — Сталин йулташа тав тăвать, хамăрăн кандидатсене Чкалов, Стецкий, Горкин, Цыганова, Спасов т. ыт. те саламлать.

Митинг пĕтĕм халăх суйланă депутатсене хапăлласа резолюци йышăнчĕ.

Испанири фронтсенче

Испанири фронтсенче лару-тăру улшăнмасăрах тăрать. Республикă çарĕсен тата пăлхавçăсемпе интервентсен çарĕсен позицийĕсем улшăнмаççĕ. Фронтсен тĕрлĕ участкисенче пăшалсенчен тата тупăсенчен çеç персе тăраççĕ.

Хĕвелтухăç (Арагони) фронтĕнче декабрĕн 14-мĕшĕнче фашиссĕн пилĕк бомбардировщикне республикă истребителĕсем ирĕксĕрех çапăçува хутшăнтарнă. Республикă самолючĕсем фашиссен пĕр самолютне персе ӳкернĕ. (ТАСС).

Совет суту-илӳ флочĕ вальли параходсем илнĕ

Пĕтĕм Сойузри „Машиноимпорт" пĕрлешӳне йулашки вăхăтра Америкăн Пĕрлешӳллĕ Штачĕсенче груз тийемелли 5 пароход илнĕ. Вăл параходсем кашни 4.230 тоннă таран груз тийеме пултараççĕ. Ике пароход Совет Сойузне килме тухнă та ĕнтĕ. Вĕсен çинче совет командисем. Ку параходсене пирĕн тинĕс суту-илӳ флочĕ вальли илнĕ.

* * *

Шыв транспорт Халăх Комиссариатĕн вакасĕпе Данире тунă „Сванетия" йатлă çĕнĕ совет теп охочĕ Копенгагенран Хура тинĕсе килме тухнă. 1938 çулхи йанварĕн 1-мĕшĕнче çĕнĕ теплоход çӳреме тытăнать. Вăл çывăх хĕвелтухăç линийĕнче çӳремеле.

„Сванетия" теплоходăн тăршшĕ — 100,89 метр, сарлакăшĕ — 14,5 метр. Вăл 1 000 тоннă груз тийеме пултарать. Ăна 244 пассажир вырнаçмалăх тунă. „Сванетия" çинчи командă 81 морйакран пулать.

ИОСИФ ВИССАРИОНОВИЧ СТАЛИН (Сойузфото кăларакан альбомран). Е. [illegible] фото ӳкерчĕкĕ (Сойузфото).

Çĕрĕç Халăх Комиссариатĕнче улшăну кирлĕ

Йалхуçалăха механизацилени, çĕнĕ агротехникăла ĕçсемпе сарлакан усă курни тата стахановла ĕçлени 1937 çулта колхозсене вăйлă тырпул туса илме май пачĕ. Гектартан 30—40—50 центнер тĕштырă туса илнĕ колхозсем сахал мар шутланаççĕ. Чылай колхозниксен çемйисем 400-шер, 500-шер пăт йе унтан та ытларах тырă илеççĕ. Çапла май, 1937 йалхуçалăх çулĕ çитес çулта татах вăйлăрах тырпул туса илессишĕн кĕрешес ĕçре пит паха опыт пулса тăчĕ.

1937 йалхуçалăх çулĕ иртрĕ. Хаљ ĕнтĕ çанăсене тавăрсах 1938 çулта кăçалхинчен те вăйлă тырпул туса илессишĕн кĕрешмеле. Çав задачăна пурнăçа кĕртме, 1938 çулта татах вăйлăрах тырпул туса илме пирĕн пурте—опыт та, материаллă услови те пур. Колхозниксене организацилеме пĕлви çеç кирлĕ. Çак йенчен илсен вара, епĕр пайан куна пĕртте мухтанма пултараймастпăр. Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ йенчен те, районсем йенчен те 1938 çулхи тырпулшăн кĕрешес ĕçе организацилеме пайан куна та тытăнман. Ку çеç те мар, 1937 йалхуçалăх çулне те вĕçлесе çитереймен-ха. Чылай колхозсенче хаљ те ĕçкунĕсем тăрăх тупăшсене валеçсе паман. Вăрмар районĕнче пайан куна 3 колхозра, Çĕрпӳ районĕнче 14 колхозра çеç тупăшсене валеçнĕ. Кунсăр пуçне тата чылай районсем кăçал кĕрсухи планне тултарайманнине, вăрлăхсене суртласа тасатса хурас ĕçе хаљ те пуçарса йаманнине, çĕрĕç органĕсем хĕлле тумалли агротехникăла ĕçсем çинчен манса кайнине шута илсен, 1938 çулхи çураки кампанийĕ ăнăçлă пулса иртесси пайан куна пит пысăк хăрушлăх умĕнче тăни такамшăн та паллă пулса тăрать.

Мĕнрен килет-ха çакăн пек кайа йулса пыни? Чи малтанах кунта Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ çинчен каламала. Вăйлă тырпулшăн кĕрешес ĕçре Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн республикăра оперативлă штаб пулса тăмала. Вăл хаљ çавăн пек штабăн тĕсне те пымасть. Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн çĕрĕк руководствине улăштарнă хыççăн кунта ĕçе улăштарса çĕнĕле организацилес тĕлĕшпе нимĕн те туман. Ку çеç те мар, сăтăрçăсене тасатса сирпĕтнĕ хыççăн та сăтăрла ĕçсен йулашкийĕсене пĕтерме те тытăнман.

Уйрăм управленисенче чылай работниксем çитмеççĕ. Тĕштырă управленийĕнче март уйăхĕнчен пуçласа управлени начаљникĕ çук. Пусуçаврăнăшсем тĕлĕшпе ĕçлекен те çуркуннеренпех çук. Ытти йенĕпе ĕçлекен специалиссем те йалан улшăнса тăраççĕ. Выљăх-чĕрлĕх управленийĕнче те чылай специалиссем çитмеççĕ. Çирĕп руководствă çуккине кура, хаљ ĕçлекен работниксем те кирлĕ пек ĕçлемеççĕ. Кам мĕн тума шутлать, çавна туса пырать. Паллах, çавăн пек ĕç тăнипе Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ районсене йертсе пыма мар, районсем мĕн-мĕн тунине те вăхăтра пĕлсе тăма пултараймасть. Çавăнпа кунта халех улшăну кирлĕ, ПСК(б)П Обкомĕпе Халăх Комиссарĕсен Совечĕ халех хутшăнмасăр çав улшăну, Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн ĕçне çĕнетсе йарасси пулас çук.

Пирĕн шутпа ПСК(б)П Обкомĕн йалхуçалăх пайĕ Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн ĕçĕ хуçалăхла ĕç тесе унăн ĕçне хутшăнмасăр тăни те пысăк йанăш пулса тăрать. Парти организацийĕсене хуçалăхла ĕçсенчен пăрăнма никам та ирĕк паман. Çавăн пекех, районсенчи парти организацийĕсем йенчен те 1938 çулхи тырпулшăн кĕрешес ĕçе хутшăнни курăнмасть-ха.

Йалхуçалăх йенĕпе 1938 çулта уйрăмăнах пысăк задачă тăрать. Кăçалччен уй-хир ĕçĕ йенĕпе те, выљăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç йенĕпе те сăтăрçăсем йалхуçалăхне нумай сийен кӳнĕ. Нумай пулмасть пулса иртнĕ суд процесĕ сăтăрçăсем йалхуçалăх ĕçне мĕнле пăтраштарса йанине уççăн кăтартса пачĕ. Колхозниксен анлă массине мобилизацилесе çав сăтăрла ĕçсен йулашкийĕсене халех пĕтермеле. Ку вăл пайанхи задачă пулса тăрать.

1938 çулхи çураки нихçан пулман пахалăхпа иртмеле. Агротехникăла ĕçсем иртнĕ çулхинчен темиçе хут ытларах пулмала. Стахановла ĕçлесси вăйлăн саралмала. Çав ĕçсене организацилеме оперативлă штаб кирлĕ. Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ çавăн пек штаб пуласси ăна халех çĕнетнинчен килет.

М. Костин.

Колхоз çамрăкĕсен пурнăçĕ

ЕЛĔК. Пĕр-ик çул кайала кăна Ваçкасси çамрăкĕсем пуша вăхăтсенче нимĕн тума та аптăраччĕç. Ĕçсĕр аптăранă йенне каççерен урам тăрăх кирлĕ мар йурăсем йурласа çӳреччĕç.

Иртнĕ çулта „Илйич“ колхоз пысăк клуб туса лартрĕ. Йалта комсомол пуçламĕш организаци уçрĕç. Колхоз çамрăкĕсем кăçал клуб çумĕнче драмкружокпа хор кружокĕ организацилерĕç. Çамрăксем çак кружоксенче пысăк интереспе хавасланса ĕçлеççĕ. Драмкружок кăçал клубра Ф. Павловăн „Йалта“ тата Н. Айзманăн „Тăшман çывăрмасть“ пйесисене лартса пачĕ. Виçĕ хут вечер туса иртерчĕç.

Драмкружок членĕсем—М. Василйевăпа Ф. Алексейев бригадирсем, И. Алексейев, Й. Йегорова, Н. Алексейев йулташсем спектакљсенче пултарулă выљаççĕ. Йалти çамрăксен 3 гармонь, 5 балалайкă, 2 патефон, 8 велосипед пур.

Çамрăксем колхозра ударник пулса ĕçлеççĕ. Акă сӳс-кантăр бригадин бригадирĕ М. Василйевă йулташ государствăна сӳс-кантăр. тăратас плана срукчен тата пысăк пахалăхпа тултарнăшăн икĕ хут преми илчĕ.

Колхоз çамрăкĕсем телейлĕ пурнăç туса панăшăн пирĕн тăван коммунисла партине тата унăн çулпуçне йуратнă Сталин йулташа чĕререн тав тăваççĕ.

Ив. Маркелов.

Тупăшсене ĕçкунĕсем тăрăх валеçессине хăвăртлатмала

СЕНТĔРВĂРРИ. Вăйлă тырпулшăн тăрăшса ĕçлесе кăçал районри колхозсем тухăçлă тырă туса илчĕç. Акă, Лапри Чăрăшкассинчи „Социалисăм“ колхоз вăтам шутпа кашни гектартан 22,76-шер центнер тырă илнĕ. Вăл шутран кĕрхи тулă: гектартан 24,30 центнер, суртлă сĕлĕ—27,61 центнер, урпа—25,22 центнер, викă—33,25 центнер илнĕ.

Пĕчĕк Маклашкинăри „Хĕрлĕ çар“ колхоз тĕш тырăсене вăтам шутпа гектартан 17 центнер, викка акнă участкăран гектар пуçне 38,29 центнер викă тухнă.

Колхозсем опытлă участкăсенче уйрăмăнах вăйлă тухăç илчĕç. Упакассинчи „Трактор“ колхозра (опытник Борцов) аммони суљфачĕпе апатлана участкăра гектартан „Лютесценс“ суртлă тулă 28 центнер, нимĕнпе те апатламан участкăра—26,5 центнер илнĕ.

Шуршăлти Блӳхер йачĕпе тăракан колхозра пӳрт лабаратори пуçлăхĕ Димитрийев йулташ кăçал чылай опытлă ĕçсем тунă. Вăл йаровизацилесе акнă тата тислĕк шывĕпе апатланă участкăра гектартан 31,5 центнер, тислĕк шывĕпе апатламасăр йаровизацилесе кăна акнă участкăра 27,09 центнер, нимĕнпе те апатламасăр тата йаровизацилемесĕр акнă участкăран 17,84 центнер суртлă сĕлĕ илнĕ.

Йрх Çирминчи „Красный трудовик“ колхозра вăтам шутпа гектартан 15,9 центнер тырă илнĕ. Минерал çăнăхĕçсемпе апатланă участкăра 19,35-шер центнер тухнă.

Пĕчĕк Маклашкинăри „Хĕрлĕ çар“ колхозри П. Харитоновпа Й. Иванов опытниксем рекордлă участкă çинче 1600 пăт çĕрулми туса илнĕ. Колхозра вăтам шутпа гектар пуçне 930 пăт çĕрулми тухнă. Кунашкал тухăçлă тырă тата çĕрулми туса илнĕ колхозсем районра татах та нумай.

Малта пыракан колхозсенче ĕнтĕ çак тухăçлă тырăсене ĕçкунĕсем тăрăх валеçсе пама пуçларĕç. Нумай колхозниксен амбарĕсем тырăпа тулса ларнă. Акă, Чĕнерти „Стрела“ колхозри Авдейĕв Йегор семйи хаљ колхозран 530 пăт тĕш тырă, 220 пăт çĕрулми илчĕ. Хĕрарăмсенчен Авдейева Аполинарийа хăй пĕччен 125 пăт, Василйева Серафима 125 пăт, Торцова Марийа 191 пăт тĕш тырă илчĕç.

Шуршăлти Блӳхер йачĕпе тăракан колхозри И. Самойлов семйи 409 пăт тĕш тырă илчĕ. Тутаркассинчи „Морйак“ колхоз членĕ Сергейев Василий семйи 500 пăт ытларах тырă илчĕ. Кив Тутайкассинчи „Кунеп“ колхозри Антонов Захар семйи 300 пăт, Терентйев Степан 400 пăт, Акшикри „Паттăр“ колхозри Йегоров Иван семйи 375 пăт тырă тата 2 пин тенкĕ укça, Чăрăшкассинчи „Социалисăм“ колхозри Кирилов Йегор семйи 438 пăт, Н. Быков—397 пăт, Карпов 363 пăт тырă илеççĕ. Ку колхозсенче хаљ колхозниксем çитес çулта тухăçлă, вăйлă тырпул илессишĕн ĕçе пуçăннă.

Анчах, çак хушăрах, хăшпĕр колхозсен руководителĕсем çине тăрса ĕçлемесĕр тупăшсене ĕçкунĕсем тăрăх валеçессине вăрăма чăсаççĕ. Каранйалĕнчи „Хастар“ колхозра В. Кузьмин, И. Андрейев, П. Колесников, А. Романов бригадисем колхозниксем авăн çапнă çĕрте ĕçленисене хаљ те ĕçкĕнекисем çине çырман. Уплер йалсоветĕнчи „Кустарь“ колхозри Максимов бригадир 3 уйăх хушши ĕçкĕнекисем çине çырман. Çакăн пекех Аслă Ăстакасси колхозĕнче те ĕçкунĕсене йĕркелесе çитермен.

Тырпулсене валеçессине тăсса пымала мар. ПСК(б)П Обкомĕпе ЧАССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ 1937 ç. декабĕрĕн 1-мĕшĕнче йышăннă тăрăх декабĕрĕн 20-мĕшне республикăри колхозсенче пуринче те тупăшсене ĕçкунĕсем тăрăх валеçсе çитермеле.

Çитес çулхи вăйлă тырпулшăн

ШĂХАСАН. Йамашри „Ударник“ колхоз çитес çулхи вăйлă тырпулшăн хатĕрленме тытăнчĕ. Колхоз 73 гектар çинче йур тытрĕ. Унсăр пуçне 14 центнер кĕл, кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ 9 центнер, фекали 17 центнер пухнă, минерал çăнăхĕсене 62 тоннă илсе хатĕрленĕ. Ку тĕлĕшпе колхозра уйрăмăнах 8-мĕш бригадăри колхозник Н. Никитин тата 5-мĕш бригадăри колхозник Федоров Филипп тăрăшса ĕçлеççĕ.

Ал. Иванов

Колхоз йышĕ ӳсет

Аслă Советĕн суйлавĕ тĕлне Йамашри „Ударник“ колхоза (Шăхасан районĕ) Шашков Илйа хăйĕн 5 йедокĕпе колхоза кĕчĕ.

Шашков халĕ хăйĕн хуçалăхне пуйан та куљтурăлă пурнăç çулĕ çине тăратассишĕн пĕтĕм вăйне хурса ĕçлет. Колхозра нимĕнле ĕçрен те йулмасть.

А. Иванов.

Ленинград хулинчи Свердлов суйлав округĕ тăрăх Сойуз Совечĕне депутата суйланă подводник-орденоносец Анатолий Федорович Селезнев.

(Сойузфото).

Çĕнĕ агротехникă мĕн пачĕ

Вăйлă тырпул туса илессишĕн пирĕн колхоз çине тăрсах ĕçлесе пычĕ. Тăрăшса ĕçлени сайа каймарĕ. Кăçалхи пек вăйлă тырпул пулнине ваттисем те астумаççĕ. Кăçал ĕлĕкхинчен 4—5 хут ытларах тухăç илтĕмĕр. Ырăш вăтам шутпа гектартан 27,3 центнер (163,8 пăт), çурхи тулă 21,76 центнер (130,6 пăт), сĕлĕ 28,6 центнер (171,4 пăт) пухрăмăр. Стахановла ĕçлесен, агротехникă кăтартăвĕсене пурне те пурнăçа кĕртсе пырсан, кашни бригадă, кашни колхоз вăйлă тырпул туса илме пултарать.

Иртнĕ çуркунне çуртри акнă вырăна епĕр 1936 çулхи кĕркуннех пĕтĕм талкăшпе кĕрсухи туса хăвартăмăр.

Вăйлă тырпулшăн кĕрешессине хĕллехи вăхăтра та манмарăмăр. Кĕр калчисене шăнасран астусах тăтăмăр. Йурпа çӳхен витĕнсе тăракан вырăнсене йур пухса витрĕмĕр. Çуркунне çуртри акмалли уйсенче те йур ытларах тытса хăвартăмăр. Çапла тунипе тăпрасенче нӳрĕ ытларах пулчĕ. Çураки валљи кирлĕ вăрлăхсене икшер хут триййер витĕр кăларса суртласа кăлартăмăр.

Йур кайсан кĕрсухи тунă уйсене сӳрелерĕмĕр. Акас умĕн пружинăллă куљтиватăрпа кăпкăлатрăмăр. Пур вăрлăха та йаровизацилесе ретлĕ акакан çейăлкăпа акрăмăр. Тулăна кашни га çине 1,6 центнер, сĕлĕне—1,5 центнер акрăмăр. Калчасем шăтса пĕр-ик çулçăлă пулсан, тимĕр сӳрепе сӳрелесе тухрăмăр. Унтан икĕ-виç кунтан çĕрĕк тăпри шĕвĕкĕ сапса тухса апат паттăмăр. Кун хыççăн калчасем пит вăйлă ӳсме тытăнчĕç. Çав вăхăтрах сумкурăкесем те унта-кунта курăнкала пуçларĕç. Сумкурăксене епĕр тухăçсемĕн çумласах ырса калчасене ӳсме чăрмантарма памарăмăр. Çанталăк условийĕсем тырпула ӳсме аван пулчĕç. Çын çӳллĕш ӳсрĕç суртрисем, лаша пĕкки те курăнмастчĕ ыраш пуссинче. Çĕнĕле ĕçленипе çав çĕр çинчех ĕлĕкхинчен темиçе хут ытларах тырпул туса илнинчен пит тĕлĕнеççĕ ваттисем.

— Пысăк тухăçлă тырпул тума пĕлмен çав епĕр. Вĕрентекен те пулман пире. Хаљхи пек агрономсем йала килсе ăшшăн каласса шре вĕрентмен, тăплантарман. Ун вырăнне чăс-часах старшинасемпе уретниксем шанкравсемпе шанкăртаттарса килсе кулапай йе ытти парăмсене вăхăтра памашăн урнă пек кăшкăрашса хĕнесе туха кайатчĕç, — теççĕ ваттисем.

Пĕтĕм Сойузри йалхуçалăх выставкинче пулма права ыйтса Çĕрĕç халăх комиссариатне зайавкă патăмăр. Выставкăра пулма права илесси шанчăклă пултăр тесе епĕр 1938 çулта тата пысăкрах тырпул туса илессишĕн кĕрешетпĕр.

В. Дергунов.

Йелчĕк р-чи „КИМ“ колхоз председателĕ.

1-мĕш участкăра Смирнов бригадине пулăшмаççĕ

Çатракассинчи (Шупашкар р-нĕ) Андрей Йефремович Смирнов Канашпа Шупашкар хушшинчи чукунçул строителствинче 9-мĕш уйăх ĕçлет ĕнтĕ. Малтанхи вăхăтра вăл вăрман каснă, кăкланă çĕрте ĕçленĕ. Вăрман ĕçĕ пĕтнĕ хыççăн, авгусăн 2-мĕшĕнчен çĕр чавнă çĕре ĕçлеме куçать. Октабĕр уйăхĕнче пулса иртнĕ стахановла вунăкунлăхра вăл 9,5 кубла метр тăпра чавас вырăнне 21 кубла метр чавса, хăйĕн нормине 200 процентран та ытла тултарса пынă. 126-мĕш пикета пĕччен 33 кун хушшинче тунă. 125-мĕш пикетра ĕçленĕ чухне шоссе çулне ватмала пулнă, вăл ăна та 6 кун ватас вырăнне 4 кунтах ватнă. Стахановла ĕçленĕшĕн ăна строителствăн управленийĕ велосипед парса премиленĕ.

Андрей Йефимович халĕ 5-мĕш километрта тăпра ĕçĕнче ĕçлет. Унăн бригадинче пурĕ 6 çын. Бригадăри рабочисем хăйсен нормисене тултарассишĕн тăрăшсах ĕçлеççĕ.

Анчах строителствăн 1-мĕш участкăри пуçлăхсем вĕсене ĕçре пулăшни çук. Ĕç хатĕрĕсене вăхăтра тăратмаççĕ. Вĕсен ĕçне хакламаççĕ. Ĕçме вĕретнĕ шыв çук. Каннă вăхăтра вулама хаçат-журналсем те участкăна илсе пымаççĕ.

— Манăн ĕçе нимĕн вырăнне хумаççĕ пулсан та, епĕр чукунçул туса пĕтеричченех ĕçлетпĕр,—тет Смирнов йулташ.

П. ЙАРГУНЌКИН.

Куçа-кĕретĕн çаратаççĕ

Вăрнарта ача-пăча санаторийĕ пур. Унăн пуçлăхĕ Буланкин врач. Анчах вăл санатори ĕçне лайăхлатас тесе мар, хăйĕншĕн тăрăшать. Çавăнпа та Буланкин государствă укçа-тенкипе хăйне мĕнле кăмăла кайать, çапла тыткалать. Акă хăшпĕр фактсем, вĕсем Буланкинăн кирревсĕр ĕççĕсене йар уççăнах кăтартса параççĕ. Буланкин патшалăх укçипе хăйне валљи йытă илнĕ. Йытă илме тата ăна тăрантарма санатори укçине 556 тенкĕ пĕтернĕ. Ку сахал-ха. Санаторине вырăсĕнă тăшмансем государство укçа-тенкине куçкĕретĕнех çаратаççĕ.

Степанов тата Вилков (йулашки Буланкинăн чаплă тусĕ, санаторинче ĕçлемест) йачĕсемпе Буланкин Хусана санатори валљи йăвăç илме тесе, 11.450 тенкĕ укçа куçарнă. Çав укçаран 10.753 тенкине виççĕшĕ: Буланкин, Степанов тата Вилков хăйсен кăсйине чикнĕ. 10.753 тенке вĕсем çапла валеçнĕ: 3100 т. Хусана çӳресе расхут курнă, ытти 7.653 тенкине йăвăç илсе пĕтернĕ тесе хăйсемех актă çырнă та, аванс отчочĕсем тăратнă. Йатлăх йăвăçсем илнĕ пулсан та, ăна та спекуљаци хакĕпе илнĕ. Ку ĕçре вĕсене санатори бухгалтерĕ Ерастов пулăшнă. Вăл пĕрмайах суйа документсене йышăнса ларнă.

Санатори Чăваш республикĕнчи Сывлăх Халăх Комиссариатне пăхăнса тăрать. Буланкин пĕрре 7.653 тенкĕлĕх аванс отчочĕ йăвăç илсе пĕтертĕм тесе Сывлăх Комиссариатне тăратнă. Укçине расхутланине кăтартакан хут вырăнне хăйех акт çырнă. Çав отчот саккунлă маррине курах. Сывлăх Халăх Комиссарĕн заместителĕ Краснов çапла çырса йарать: „Принять закупленный стройматериал по актом по фактической цене“. Ку чăннипех тăшманла ĕçсем тума çӳлтен пулăннине пĕлтерет. Вăрнарта тем тума та йăвăç тупма пулать. Анчах санаторинчи тăшмансем валљи Вăрнарта йăвăç çук. Вĕсем Хусантан „илеççĕ“!..

Пĕтĕмпе саккунсăр укçа пĕтерни 20.000 тенке çитет.

Тĕпне çитиччченех шырасан, ун çумне тепĕр икĕ-виççĕ те хушăнма пултарать.

Санаторинчи тăшмансене хăвăрт тăрă шыв çине кăларса пролетари сучĕ умне тăратмала.

В. С. Семенов.

С. М. Љубимовпа Н. Коничева

Çурхи тулă акса тăвас тĕлĕшпе тунă сăнав результачĕсем

Чăваш республикĕнче çурхи тулăна талкĕшпе акса тума пуçланăранпа 4—5 çул иртрĕ. Малтанхи çулсенче тулă тухăçĕ вăтам шутпа 8,1 центнертан иртмен. 1937 çулта çеç агротехникăла ĕçсене тĕплĕн пурнăçа кĕртнипе тулă тухăçне хăпартас тĕлĕшпе пысăк çитĕнӳсем тунă. Стахановецсем кăçал хăйсен ĕçĕнче нуринчен ытла ĕç пахалăхĕпе тата агрономсем кăтартса панисене пурне те пурнăçа кĕртессишĕн кĕрешрĕç. Çав май Колљовкăри Сталин йачĕпе тăракан колхозри Хромов йулташ бригади 12 гектăр çинчен гектартан 34-шер центнер çурхи тулă туса илчĕ.

Ку бригадă участки çинчи тăпра тĕттĕм кăвак, вăтам тăмлă. Çурхи тулă акас умĕн çав çĕр çинче иккĕмĕш çул ӳсекен клевĕр шулнă. Тăпран сухаланакан сийне тăрăнлатни пысăк усă панине шута илсе кĕр сухине сентабĕрĕн 15—16-мĕш кунĕсенчех 20 сантиметр тăрăнăшĕ сухаласа хăварнă.

Мĕнле сухаланине тĕрĕслесе пыма тракторпсиа пĕрле трактор çинче пĕр колхозник ларса пынă. Тулă акмалли çĕр çине кашни гектар пуçне 9-шар тоннă шутласа аван çĕрнĕ тислĕк тăкнă. Апрелĕн 15-мĕш кунĕнче кашни гектар çине 2 центнер çелитрă, 2 центнер суперфосфат, 1 центнер кали тăварĕ сапса тухнă. Апрелĕн 17—18-мĕш кунĕсенче тракторпа 17—18 сантиметр тăрăнăш сухаласа, çавăн хыççăнах пĕр пĕрле икĕ хут тухса сӳреленĕ.

Тулă вăрлăхне „Лютесценс 062“ суртне тĕплĕн хатĕрленĕ. „Триумф“ тата „Триййер“ сортировкăсемпе суртланисĕр пуçне, вăрлăха алăпа суйланă, вутпуççирен чӳхесе тасатнă, йаровизациленĕ. Акассине кашни гектар çине 1,7 центнер шутласа, апрелĕн 18-мĕш кунĕнче ретлĕ акакан çейăлкăпа акнă.

Калчасене пăхса ӳстерессине те тĕплĕн тунă. Ийунĕн 10-мĕш кунĕнче çум çумлама пуçланă. Иккĕмĕш хут çумлассине нумайă колхозсем 15—20 кунтан пуçлаççĕ. Храмов бригади иккĕмĕш хут çумлассине нумайа тăсмасăр—ийунĕн 15-мĕш кунĕнчех тытăнса тулă çинче пĕр çумкурăк та хăварман. Кун хыççăн тулă вăйлăн ӳсме тытăнса çĕнĕрен шăтма пуçлакан çумкурăксене айăла туса хăварнă.

Çĕре тарăн сухалани тулăна ӳсме лайăх услови паракан куљтурă хыççăн акни, тĕрлĕрен тислĕкпе тата минераллă пахалăхсемпе çĕре çемçетерни, пахавăрлăхпа вăхăтра акни, çумкурăксене пĕтерни,—çак агротехникăла ĕçсене пурне те пĕрле туни Храмов бригадинче пысăк тухăçлă тулă туса илме май пачĕ.

Зеленовкăри Ленин йачĕпе тăракан колхозра Мишаков Семен бригади 6,5 гектар çинчен вăтам шутпа кашни гектартан 26,2-шер центнер тулă туса илнĕ. Ку вырăна хăшпĕр çулсенче шыв йулать. 1937 çулта шыв илмен. Çурхи тулă умĕнхи куљтурă—кĕрхи тулă. Кĕр сухине ирхи срукра—августăн 29—31-мĕш кунĕсенче 18 сантиметр тăрăнăш илтерсе сухаланă. Апрелĕн 12-мĕшĕнче гектар пуçне аммиаклă çелитрă 1 центнер, суперфосфат 1 центнер, кали тăварĕ 1 центнер сапнă. Апрелĕн 16-мĕш кунĕнче çĕре çемçетмелисене 12—13 сантиметр тарăнĕн сухаласа тăпра айне тунă та, пĕр йĕрпе икĕ хут тухса сӳреленĕ. „Лютесценс 062“ суртлă вăрлăха „Триумфпа“ „Триййер“ сортировкăсемпе суртланă, потравит тунă, анчах йаровизацилемен. Акассине пысăкрах нормăпа—гектар çине 1,85 центнер шутласа ретлĕ акакан çейăлкăпа акнă. Майăн 16-мĕш кунĕнче аммиаклă çелитрăна, суперфосфата, кали тăварне татах гектар çине пĕрер центнер шутласа апат панă. Çумлассине пĕр хут çеç—ийунĕн 11—13-мĕшĕнче çумланă. Тулă 1,2 метр ӳснĕ.

„Лютесценс 062“ суртлă тулă çитмен пирки 6 гектар çине „Цезиум 0111“ акмала пулнă. Ку сурта вутпуççи вăйлă йерnĕ пирки, тата çапнă чухне вăрлăхсем начар ӳкнĕ пирки ун тухăçĕ гектартан 16 центнер çеç пулнă. Ытти условисем икĕ суртăн та пĕр пекех пулнă.

Хирпуçри „Победа“ колхозра (Вăрнар р.) йалхуçалăх институчĕн сотрудникĕ Андрейев кăтартса панипе ĕçлесе 3 гектар çинчен кашни гектартан 26,7-шер центнер çурхи тулă туса илнĕ. Ытти 60 гектар çинче çурхи тулă вăтам шутпа 18,3-шер центнер çеç тухăç панă. Пысăк тухăç панă тулăна тăмлă кăрачăланнă хура тăпра çине акнă, тулă умĕнхи куљтурă—ыраш. Кĕр сухине сентабĕрĕн 27-мĕш кунĕнче 18 сантиметр тарăнăш илтерсе сухаланă. Çуркунне апрелĕн 17-мĕш кунĕнче сӳреленĕ. Хĕлле йанварĕн 18—25-мĕш кунĕсенче кашни гектар çине 300 лав çĕрĕк тăпри тăкнă. („Победа“ колхоз 1937 çурхи çуркунне суртри акмалли çĕр çине пурĕ 12 пин лав çĕрĕк тăпри тăкнă).

Апрелĕн 26-мĕш кунĕнче 14 сантиметр тарăнăш сухаласа сӳренĕ.

„Лютесценс 062“ вăрлăха „Триййер“-па суртланă, йаровизациленĕ. Вăрлăхăн хуçалăхла пахалăхĕ 98 процент пулнă. Акассине апрелĕн 27-мĕшĕнче ретлĕ акакан çейăлкăпа, гектар çине 1,6 центнер шутласа акнă. Майăн 7—8-мĕшĕсенче гектар çине аммиаклă çелитрă 1 центнер, суперфосфат 2 центнер, кали тăварĕ 1 центнер шутласа калчасене апат панă. Ийунĕн 10-мĕш кунĕнче тулă çинчи çумкурăксене çумланă, çав кунах кивĕ уламран 3—4 сантиметр хулăмĕш мулчча сарнă.

Çĕрĕк тăпри тăкса, тата минераллă çăнăхсемпе çĕре çемçетерни, мулчча сарни, çĕре аван ĕçлени „Победа“ колхоза пысăк тухăçлă тулă туса илме май пачĕ.

Ораушри Киров йачĕпе тăракан колхозра Сергейев бригади 5 гектарлă вырăнта кашни гектартан 25,9-шер центнер тулă илчĕ. Ку уйра варачăланнă тăмлă хура тăпра. Тулă умĕн ку вырăнта 4-мĕш çул ӳсекен люцернă хыççăн сĕлĕ акнă, 1936 çулта кĕл, суперфосфат, тата калци цианамичĕпе çĕре çемçетерсе лартнă çĕрулми тата пăрса пулнă. Тулăна „Лутесценс 062“ суртлине вĕриле майпа протравит тунă. Апрелĕн 13-мĕш кунĕнче кашни гектар çине 200 лав шутласа 2,6 гектар çĕр лаптăкĕ çине тислĕк тăкнă, гектар çине аммиаклă çелитрăна 1,1 центнер, суперфосфата 2 центнер, çали тăварне 2 центнер шутласа 5 гектарĕнех минераллă çăнăхсем тăкнă та. Апрелĕн 15—17-мĕш кунĕсенче 14 — 16 сантиметр тарăнăш сухаласа тăпра айне тунă.

Апрелĕн 17-мĕшĕнче ретлĕ акакан сейăлкăпа гектар çине 1,6 центнер шутласа акнă. Майăн 2—3-мĕшĕнче аммиаклă çелитрăна гектар çине 0,5 центнер шутласа çийелтен сапса апат панă.

Ку колхозра пысăк тухăçлă тулă тунă пуринчен ытла çĕре çемçетмелисем нумай тăкнинчен килнĕ. Сергейев бригадинчех çĕре çемçетмен çĕртен тулă гектартан 19,4-шер центнер çеç пулнă.

Çав колхозра бригадир Запасов 6,8 гектар çинчен гектартан 22,3-шер центнер тулă илнĕ. Тăпра пахалăхĕ, тулă умĕнхи куљтурăсем, акас йĕрке Сергейевпе Запасов бригадинче пĕр пекех пулнă, анчах Запасов бригадин агротехники кăшт урăхларах. Запасов хăй участки çинче кĕрсухи тунă, Сергейев туман. Вăрлăха Запасов йаланхи пекех типĕле майпа вутпуççирен тасатнă. Акас нормăна Сергейеврай пĕчĕкрех—1,5 центнер илнĕ. Çĕре çемçетмелисенчен кали тăварĕ çеç—гектар çине 1,2 центнер сапнă. Çаксем пурте тулă тухăçне чакарнă. Сергейăвăн агротехники усăлăрах пулни курăнать. Анчах малта тăракан агротехникăна Сергейев та пĕтĕмĕшпе пурнăçа кĕртеймен. Ораушра çĕре çинче татах пысăкрах тухăç илме май пур.

Çĕнĕ Йахакассинчи Сталин йачĕпе тăракан колхозра пĕр участкă çинче кашни гектартан 25 центнер тулă пулнă. Кунта тĕттĕм кăвак, вăтам тăмлă тăпра. Тулă умĕн ыраш пулнă. Апрелĕн 15-мĕшĕнче гектар çине аммиаклă çелитрăна 2,5 центнер, кали тăварне 2,5 центнер шутласа минераллă çăнăхсем сапнă. Апрелĕн 17-мĕш кунĕнче 14 сантиметр тарăнăш сухаласа çав минераллă çăнăхсене тăпра айне тунă. „Лютесценс 062“ суртăх алăпа суйласа типĕле протравит туса йаровизацилесе апрелĕн 22-мĕшĕнче хĕреслĕ майпа акнă. Акмалли нормă—1,6 центнер пулнă. Калча шăтас умĕн, апрелĕн 30-мĕш кунĕнче аммиаклă çелитрăпа кали тăварне гектар çине пĕрер центнер шутласа сапса апат панă.

Вăрлăха лайăх суртлани, хĕреслĕ акни, минераллă çăнăхсене 2 тапхăр хушнипе тĕрлĕрен майпа пысăк нормăпа пани — пысăк тухăçлă çурхи тулă туса илме пулăшнă.

Ку бригадăрах çак участкăпа пĕр пек условисенче выртакан пĕр пек агротехникăпа ĕçлесе, анчах минераллă çăнăхсене тăкмасăр акнă вырăнта, тулă тухăçĕ 22 центнер çеç пулнă.

Гектартан 17—22 центнер çурхи тулă туса илнĕ Вăрнар районĕнчи кашни колхозăн агротехники çинчен çырмасан та, çӳлте асăннă колхозсен агротехникине пăхса тухнипех çапла выводсем тума пулать:

1) Тырпул тухăçне хăпартас ĕçре Вăрнар районĕнчи колхозсем сухалакан тăпра сийне тарăнлатни питĕ пысăк вырăнта тăрать;

2) Пысăк тухăçлă тулă туса илес ĕçре сурт та пысăк вырăнта тăрать. Чăваш республикĕнче „Лютесценс 062“ сăтăрçăсем сĕнекен „Цезиум 0111“ йатлă суртран тухăçлăраххи паларчĕ. Хумушри колхозĕнче пĕр пекех ĕçлесе, акнă „Лютесценс 062“ сурт гектартан 17,2 центнер, „Цезиум 0111“ 12,5 центнер тухăç панă;

3) Калчасене апат пани çурхи тырăсен тухăçне пит нумай хăпартнине пумай сăнавсенче курма пулать. Тĕслĕхрен, Ворошилов йачĕпе тăракан колхозра (Вăрнар р.) гектар çине аммиаклă çелитрăна 1 центнер, суперфосфат 1,5 центнер, кали тăварне 0,8 центнер шутласа апрелĕн 25-мĕш кунĕнче калчасене апат пани кашни гектар çинчен 10 центнер ытларах çурхи тулă туса илме май пачĕ;

4) Мăн Йаушри колхозра хĕреслĕ акнипе ретсĕр акнипе танлаштарсан çурхи тулă кашни гектар çине 2 центнер ытларах пулнă. Тĕрлĕ майпа акнипе çурхи тулă тухăçĕ çапла пулнă:

алăпа акни, кашни гектартан—9,6 ц.
ретлĕ акакан çейăлкăпа акни—10,8 "
хĕреслĕ акни . . . . . 11,6 "

5) Çимбилейри сăнав станци кăтартнă тăрăх çурхи тулă умĕнхи куљтурăсенчен чи лайăххи клевĕр шутланать;

6) Çурхи тулă вăрлăхне йаровизацилесе акни тулă тухăçне кашни гектартан 2-шер центнер йе ытларах та хăпартать;

7) Акмалли нормăна ӳстерни—ĕлĕкхи „стандартлă“ 1,5 центнер вырăнне гектар çине 1,6—1,9 центнер акни—тулă тухăçне хăпартакан майсенчен пĕри пулса тăрать. Тулă пит хунамасть те, тăпрари апата пурне те илсе пĕтерейместь, çавăнпа ăна йăвăрах акни пуçшех кирлĕрех;

8) Шултра вăрлăхпа акни тулă тухăçне хăпартать;

9) Ир акассине, иртерех çумлассине, вăрлăха протравит тăвассине ытти агротехникă кăтартăвĕсемпе пĕрле тусан, тулă тухăçлă ытларах пулать.

Вăрнар районĕнчи колхозсем малта тăракан çĕнĕ агротехникăна алла илме пуçланипе тырă тухăçне чылайах хăпартрĕç. Анчах çак çитĕнӳсемпе лăпланма ир-ха. Тырă тухăçне ӳстерес майпа тумалисенчен епĕр хаљ нумайăшне тумастпăр. Тĕслĕхрен, çӳлте асăннă сăнавсенче нихăшĕнче те кĕрсухи умĕн хăмăла ăнăх сухаласси туман.

Хĕллехи вăхăтра стахановецсемпе пур колхозниксем те тырă тухăçне хăпартас тĕлĕшпе тумалли ĕçсен планне тумала та, ăна пурнăçа кĕртессишĕн халех çине тăрса ĕçе тытăнмала.

Чăваш йалхуçалăх институчĕ.

1937 çулхи декабĕрĕн 12-мĕшĕнче ССР Сойузĕн Аслă Совет суйлавĕнче коммуниссемпе партире тăманнисен блок кандидачĕсемшĕн сасăланă суйлавçăсен хисепĕ çинчен Тĕп Суйлав Комиçси пĕлтерни

1937 çулхи декабĕрĕн 15 мĕшпе 16-мĕшĕнче Тĕп Суйлав Комиççине инçетри чылай суйлав участкисенчен, çул çинчи пуйăссемпе пароходсем çинчен сведенисем килчĕç, вĕсенчен ку таринччене тулли сведенисем илмен пулнă. Çакна май ССР Сойузĕ тăрăх суйлавçăсен хисепĕ татăклăнах палăрса çитрĕ—94. 138. 159 çын (декабĕрĕн 15-мĕшĕнче пĕлтернинчен 498. 681 çын ытларах), çавăн пекех сасăланă çĕре хутшăннисен хисепĕ те 91. 113 153 çынна çитиусрĕ (декабĕрĕн 15-мĕшĕнче пĕлтернипе танлаштарсан 793. 807 çын ытларах ÿснĕ), вăл суйлавçăсен хисепĕнчен 96,8 процент пулать.

Çакăнта кăтартнă сведенисене илни Тĕп Суйлав Комиççине мĕн пур округсем тăрăх коммуниссемпе партире тăманнисен блок кандидачĕсемшĕн панă сасăсен хисепне итог тума май пачĕ.

Сойуз Советне суйламали мĕн пур суйлав округĕсенче коммуниссемпе партире тăманнисен блок кандидачĕсемшĕн 89. 844. 271 çын сасăланă, вăл сасăланă çĕре хутшăннисен пĕтĕм хисепĕнчен 98,6 процент пулать. „ССР Сойузĕн Аслă Советне суйламалли Положенин" 90-мĕш статйи тăрăх чăн мар тесе йышăннă бÿллетенсем 636.808 пулнă. Кандидатсен хушамачĕсене чĕрсе пăрахнă бÿллетенсем—632.074.

Националънăйсен Советне сойузлă республикăсенчен суйламали мĕн пур суйлав округĕсенче коммуниссемпе партире тăманнисен блок кандидачĕсемшĕн 39.063.169 çын сасăланă, вăл сасăланă çĕре хутшăннисен пĕтĕм хисепĕнчен 97,8 процент пулать. „ССР Сойузĕн Аслă Советне суйламалли Положенин" 90-мĕш статйи тăрăх чăн мар тесе йышăннă бÿллетенсем 1.487.582 пулнă. Кандидатсен хушамачĕсене чĕрсе пăрахнă бÿллетенсем—562.402.

Уйрăм сойузла республикăсем тăрăх Сойуз Совечĕпе Националънăçсен Советне суйлании итогĕсене çак таблицăра кăтартса панă:

Сойузлă республикăсен йачĕ	Суйлавçăсен хисепĕ	Сасăланă çĕре хутшăннă		Коммуниссемпе партире тăманнисен блок кандидачĕсемшĕн сасăланă			
				Сойуз Советне		Националънăçсен Советне	
		Миçе çын	Суйлавçăсен хисепĕнчен процентпа	Миçе çын	Сасăлаписен хисепĕнчен процентпа	Миçе çын	Сасăланисен хисепĕнчен процентпа
РСФСР	60.571.292	58.623.335	96,8	57.687.755	98,4	57.142.882	97,5
Украинă ССР	17.539.876	17.156.273	97,8	16.980.303	99,0	16.799.399	97,9
Белорус ССР	3.007.342	2.929.666	97,4	2.892.815	98,7	2.884.244	98,4
Азербайджан ССР	1.648.877	1.677.117	95,6	1.564.183	99,2	1.555.523	98,6
Грузин ССР	1.940.547	1.866.189	96,2	1.849.932	99,1	1.847.367	99,0
Армйан ССР	620.220	596.675	96,2	592.146	99,2	592.682	99,3
Туркмен ССР	691.925	651.962	94,2	647.345	99,3	644.329	98,8
Узбек ССР	3.548.441	3.319.216	93,5	3.286.897	99,0	3.274.473	98,6
Таджик ССР	774.864	738.099	95,3	728.656	98,7	726.064	98,4
Казах ССР	2.996.367	2.901.072	96,9	2.882.844	99,4	2.862.726	98,7
Киргиз ССР	799.408	753.649	94,3	731.395	97,1	733.480	97,3
ССРС тăрăх пĕтĕмпе	94.138.159	91.113.153	96,8	89.844.271	98,6	89.063.169	97,8

Националънăçсен Советне автономлă республикăсенчен, автономлă облăçсенчен тата нациле округсенчен суйламали мĕн пур суйлав округĕсенче суйлавçăсен хисепĕ 10.353.188 çын пулнă. Сасăланă çĕре 9.954.133 çын хутшăннă, урăхла каласан, çав округсенче коммуниссемпе партире тăманнисен блок кандидачĕсемшĕн 9. 757.435 çын сасăланă, вăл сасăланă çĕре хутшăннисен пĕтĕм хисепĕнчен 98,0 процент пулать. „ССР Сойузĕн Аслă Советне суйламали Положенин" 90-мĕш статйи тăрăх чăн мар тесе йышăннă бÿллетенсем 61.784 пулнă. Кандидатсен хушамачĕсене чĕрсе пăрахнă бÿллетенсем—134 914.

ССР Сойузĕн Аслă Совет суйлавне иртерес тĕлĕшпе ĕçлекен Тĕп Суйлав Комиççи.

Суйлавçăсем патне йанă çыру

Суйлавçă йулташсем! ССРС Аслă Советне суйлани пирĕн Совет Сойузĕнчи ĕççыннисемшĕн пĕтĕм халăх аслă уйавĕ пулса тăчĕ. Пĕтĕм халăхпа сасăланă çĕре хутшăнса, пирĕн çĕршыври ĕççыннисем хăйсен граждăнла пысăк тивĕçлĕхне пурнăçларĕç. Коммуниссемпе партире тăманнисен блокĕ кандидачĕсем, совет халăхĕн пĕрремĕш кандидачĕ аслă Сталинпа, тата унăн çывăх соратникĕсемпе пĕрле, пурте Совет Сойузĕн Аслă Совечĕн депутачĕсене суйланчĕç.

Пирĕн нумай нациле совет халăхĕ ССРС Аслă Советне суйланă çĕрте коммуниссемпе партире тăманнисен блок кандидачĕсемшĕн пĕр шухăшлăн сасăласа, Ленин—Сталин партийĕн йалавĕ айĕнче нихăçанхи пек мар иксĕлми çирĕп пĕрлĕхпе тăнине кăтартрĕ, партин тата халăхсен çулпуçне, Сталин йулташа, аслăн йуратса чĕререн шаннине каласа пачĕ.

ССРС Аслă Советне халăх суйласа йанă депутатсен шутĕнче манăн йат та пур. Ку мана савăнтарать, çĕкленте рет, халăхшăн тата нумай ĕç тума хушать. Мана çакăн пек пысăк чыс тата шанчăк панăшăн, суйлавçăсене—Чăваш республикĕнчи ĕççыннисене тав тăватăп. Совет халăхĕн ирĕкне пурнăçласишĕн алла усмасăр, вăйа хĕрхенмесĕр, чĕререн те тÿрĕ кăмăлпа ĕçлеме, халăхран нихăçан уйăралми çирĕп тăма, пирĕн парти тата халăхсен йуратнă çулпуçĕ Сталин йулташ йертсе пынипе, халăхан мĕн пур тăшманĕсене хирĕç хайаррăн кĕрешме сăмах паратăп

Сталин йулташ хăйĕн Мускав хулинчи Сталинский округри суйлавçăсем умĕнче тухса каланă сăмахĕнче суйлавçăсене канаш пачĕ, пире, Аслă Совет депутачĕсене, наказ пачĕ. Сталин йулташ хăйне тивĕçлĕ генилĕхпе суйлав кунĕсенче пирĕн аслă халăхăн кăмăлĕпе шухăшне каласа пачĕ, пире депутатсене ĕççыннисем шаннине тÿрре кăларас, совет çĕршывне çĕнĕ çĕнтерÿсем патне малала илсе кайас тесен, хамăра мĕнле тыткалама малине, мĕнле ĕçлĕмелине кăтартса пачĕ.

Епĕ, Аслă Советăн депутачĕ, ĕçре аслă Сталинăн тата совет халăхĕн наказне тасан тытса пыма, Ленин—Сталин çулĕпе малала кайма хамăн суйлавçăсем умĕнче тупа тăватăп. Халăх ĕçĕшĕн, коммунисăмшăн кĕрешнĕ çĕрте аслă Ленин, аслă Сталин примерĕпе ĕçлесе пыма пĕтĕм вăйхала паратăп.

ССРС Аслă Совечĕн депутачĕ М. Сахйанова.

Епĕ Сталинла Конституцине сыхлатăп

(Красноармейец çырăвĕ)

Совет Сойузĕнчи граждăнсен пурин те вĕренÿ прави пур. Ку права—пуçламĕш шкулсенче пурне те обйазателнă йеркепе вĕрентнипе, пур шкулсенче те, вăл аслă шкулсенче те, тÿлеттермесĕр вĕрентнипе, аслă шкулсенче вĕренекенсене пурне те пекех патшалăх стипенди парса тăнипе, шкулсенче тăван чĕлхепе вĕрентнипе, заводсенче, совхозсенче, машина-трактор станцисенче тата колхозсенче ĕçхалăхне производства, техникă, агрономи ĕçне тÿлеттермесĕр вĕрентнипе пурнăçа кĕрсе пырать.

Вăл чăнах та апла иккенне епĕ хамăн çемйе примерĕ тăрăх та лайăх куратăп. Епĕр—тăвата тăван, пурте патшалăх шучĕпе вĕрен е професçи илнĕ. Манăн пичче—Степан трактористсен курсне вĕренсе пĕтернĕ хыççăн икĕ çул ĕнтĕ тракторис пулса ĕçлет. Шăлăм—Сергей учителе вĕренсе тухрĕ. Тепĕр шăлăмĕ—Колъа авиаци шкулĕнче вĕренет. Епĕ хам та çара киличчен пилĕк çул учителте ĕçлерĕм.

Халĕ Хĕрлĕ çар ретĕнче, çавăн пек пысăк правасем панă Сталинла Конституцине пысăк тимлĕхпе сыхласа тăратăп. Мана командовани 8 хутчен благодарнăç, пĕрре наградă пачĕ. Малашне те хамăн йуратнă çĕршыва сыхлас ĕçе Сталин тапхăрĕнче пурăнакан çынна тивĕçлĕ пек туса пыма сăмах паратăп, мĕншĕн тесен, тĕнчери пĕр тен-пĕр телейлĕ те савăнăçлă çĕршыва, социалисăм çĕршывне сыхласа тăрасси маншăн чи пысăк тивĕç пулса тăрать.

А. Михайлов.

Сахйанова йулташа ССР Сойузĕн Аслă Совечĕн Националънăçсен Совечĕн депутат мандатне панă

Декабĕрĕн 15-мĕшĕнче Националънăçсен Советне суйламали Шупашкар йал № 494 Округĕн округри суйлав комиççийĕн ларăвĕ пулчĕ. Ларура обчăлă организацисемпе халăх обществин тата пичет представителĕсем пулчĕç. Комиççи председателĕ П. Д. Краснов йулташ пĕрремĕш ыйтупа округа кĕрекен суйлав участкисем тăратнă протоколĕсене вуласа пачĕ.

—Кудемер участкинче 289 суйлавçăран 285 суйлава хутшăннă. Пиатино участкинче 380, суйлавçăран 379. Паçпак участкинче 575 суйлавçăран 574. Çĕнйал Ойкасси участкинче 400 суйлавçăран 400, Чăкăр участкинчи 602 суйлавçă, Шорчекасси участкинчи 586 суйлавçă пурте суйлава хутшăннă, т. ыт. те,—пĕлтерет Краснов йулташ.

Суйлав участкисен протоколĕсене пурне те пăхса тухсан, сасăсен хисепне шутласа тухса протокол çырса çирĕплетрĕ комиççи ларăвĕ. Вара каçхине 5 сехетре, Краснов йул. Марийа Михайловна Сахйанова йулташа вăл ССР Сойузĕн Аслă Советне депутата суйлани çинчен пĕлтерсе, Аслă Совет депутачĕн мандатне пачĕ. Нумайчен алă çупни, урра кăшкăрни йанăраса тăчĕ пÿлĕмре.

Совет çĕршывĕн Аслă Совечĕн депутачĕ Сахйанова йулташ мандата алла илнĕ хыççăнах, округри суйлав комиççи членĕсем умĕнче, обществăлă организацисемпе ĕççыннисен обществисен представителĕсем умĕнче, вĕсем урлă округри пĕтĕм суйлавçăсем умĕнче, малашне те халăх телейĕшĕн, большевиксен партийĕн татах та ытларах вăй хурса ĕçлеме пулни çинчен каларĕ.

—Аслă Совет депутатне суйлани ĕçхалăх умĕнче тăракав задачăсене пурнăçлассишĕн кĕрешес ĕçре, халăх тăшманĕсене тымарĕпех кăкласа пырас ĕçре ман çине татах та пысăк ответлăх хунине пĕлтерет. Ăна епĕ чыслăн пурнăçласа пырăп, халăх хунă пысăкран та пысăк шанчăка тивĕçлĕ пулăп,—терĕ Сахйанова йулташ.

В. И. Добрынин.

6500 çын ытла Сталин докладне итленĕ

СĔНТĔРВĂРРИ. Районĕпе халĕ 375 радио точка шутланать. Радио итлекенсен шучĕ çулран çул ÿссе пырать. Декабĕрĕн 11-мĕшĕнче Мускаври Сталинский суйлав округĕнче халăхсен çулпуçĕ Сталин йулташ тунă доклада районра 6500 çын ытла радио тăрăх итленĕ. Тата çак доклада декабĕрĕн 12-мĕшĕнче чăвашла Шупашкартан радио тăрăх кăларнине районри ĕççыннисем хавасланса тăнларĕç.

В. Василйев.

Суйлав хыççăн

ÇĔМĔРЛЕ (хамăр корр.). Комбинатпа „Большевик" заводри рабочисем Мускавра тухакан хаçатсене илсенех пĕрлешÿлĕ каласусем, вулавсем туса иртерчĕç. Рабочисем ССР Сойузĕн Аслă Советне депутата суйлама палăртнă кандидатсем пурте суйланнишĕн савăнаççĕ. Вĕсем халăхсен çулпуçĕ Сталин Аслă Совет депутачĕ пулнипе хавхаланаççĕ.

— Епĕр чи лайăх çынсене, Ленин-Сталин партийĕн пĕтĕм вăйа хурса ĕçлекенсене Аслă Совета суйларăмăр. Пирĕн пĕрремĕш депутат йуратнă Сталин. Манăн çакна калас килет: пысăк тав йуратнă аттене, пире çамрăксене телейлĕ те савăнăçлă пурнăç туса паракан Сталина,—терĕ комбинатри рабочи Григорий Василйев йулташ.

Чи лайăх çынсем депутата суйлании рабочисен ĕçри хастарлăхне хăпартать. Стахановецсем çĕнĕ çитĕнÿсем тума пуçларĕç. „Труженник" заводри Смирнов йулташ смени декабĕрĕн 13—14-мĕшĕсенче нормăна 150 процентшар тултарса пычĕ.

— Сталин йулташ пирĕн пĕрремĕш депутат. Вăл пире малашне те телейлĕ пурнăç çулĕпе коммунисăм патне хăвăрттăн илсе кайать. Епĕр вăл вĕрентнине пурнăçлама йаланах хатĕр,—терĕç комбинатри авса пукансем тăвакан цехри гъанцировкăри рабочисем.

Хар. Лисин

А. М. Краснов йулташ депутат мандатне илчĕ

ИЕТЕРНĔ, декабĕрĕн 17-мĕшĕ (телефонпа, хамăр корр.). Йалан ирхине Сарийалĕнче Çĕмĕрле Суйлав Округ комиççийĕн председателĕ Осипов й. ССР Сойузĕн Аслă Совечĕн Сойуз Советне суйланă Андрей Михайлович Краснов йултаща депутат мандатне пачĕ.

— Краснов йулташ,—тет Осипов йул. Андрей Михайловича депутата суйланă йачĕпе саламласа,— халăх шанчăкне, партипе правительство шанчăкне сапăн çĕре кăтартмала. Халăх сан çине пысăк шанчăк хучĕ. Халăхăн шанчăклă ывăлĕ пуласси пысăк хисеп вăл.

Андрей Михайлович хумханипе нумай калаçаймарĕ.—Епĕ 14 çулхи ачарап пуçласа пайапа çитиччен халăхшăн ĕçлеме вĕренсе, халăхшăн ĕçлерĕм. Халăх мана шаннине, епĕ лайăх туйатăп, çав шанчăка епĕ çухатас çук,—терĕ Краснов йулташ.

— Мана телейлĕ вĕрентсе ÿстернĕшĕн, çав тери пысăк хисеп туса çапла пысăк шанчăк хунăшăн, епĕ Чăваш ĕçхалăхне, коммунисен партине, аслă Сталин йултаща чĕререн тав тăватăп. Хамăн ĕçре малашне те Ленин — Сталин парти ĕçĕшĕн, халăх телейĕшĕн мĕн пур вăйа хурса ĕçлеме сăмах паратăп,—тесе пĕтерчĕ Краснов йулташ хăйĕн сăмахне.

Уйăп Мишши.

Клевер çапса пĕтерчĕç

ЕЛĔК. Урмай йалĕнчи „Çуттала" колхоз клевĕр çапса пĕтерчĕ. Ку ĕçре Роменовпа Гаврилов бригадирсем уйрăмăнах тăрăшса ĕçлерĕç. Колхоз государствăна çĕрÿлми тăратас плана та 100 проценчĕпех тултарчĕ.

Ф. Филиппов.

Зайом укçисем парса татрĕç

ЕЛĔК. Илйич йачĕпе тăракан колхозри колхозниксем „ССР Сойузĕн оборонине тĕреклетмели зайом" укçине 100 проценчĕпех тÿлесе татрĕç.

Ив. Маркелов.

Çар ĕçне вĕренеççĕ

Чăвашсен коммунисла йалхуçалăх аслă шкулĕнчи студентсем çар ĕçне тăрăшса вĕренеççĕ. Кашни кану кунĕнче кунта стрелковой занъатисем пулса иртеççĕ. Нумай пулмасть, Ворошилов пек тĕл перекенсен нормине парса 22 çын значоксем илчĕç.

Г. Иванов.

Патăрйел педучилищчине тăшмансенчен тасатмала

Патăрйеленчи педучилищăра нумай вăхăт хушши Авзалов, Самайлов, Маслов, Турхан, Ухсай, Кушников, Иритков тата ытти тăшмансем ăшă йăва çавăрса, хăйсен киревсĕр сăтăрла ĕçĕсене туса пынă. Вĕсем пирĕн чи ответлă участăка—педагогикă кадăрĕсем хатĕрлес ĕçе аркатма пăхнă, вĕренекенсем хушшинче буржуалă националисла сĕрĕм сарса, пирĕн çамрăксене Ленин—Сталин партине хирĕç тăратма ĕмĕтленнĕ. Çав етем сăнпитне çухатнă сăтăрçăсене кăкласа пăрахнă, анчах Патăрйеленчи педучилищă тăшмансемпе вĕсен хÿрийĕсенчен тĕпĕпех тасалса çитеймен-ха. Çак тăшман йулашкийĕсем пĕтĕм ĕçе чармантарса пыраççĕ. Кун çинчен вĕренÿ пахалăхне кăтартакан тĕслĕхсем уйрăмах витĕр каласа параççĕ.

Педучилищăра пурĕ 475 вĕренекен. Вĕсенчен çентабĕр уйăхĕнчен пуçласа пайанхи куна çитиччен вĕренÿре пĕр отличник те палăрман.

Вĕренÿ ударникĕсем те кунта пит сахал. Вĕренÿ çулĕн пĕрремĕш чĕрĕкĕнче начар вĕренекенсем пĕтĕм педучилищипе 46 процент шутланнă. Тутарсен отделенийĕнче начар вĕренекенсен шучĕ 96 процента йахăн çитет. Вăтам вĕренекенсем пурĕ те кунта 4 процент çеç шутланаççĕ.

Соколов директорпа вĕренÿ пайĕн пуçлăхĕ Йевлампйев:—Пирĕн ачасем начар вĕренеççĕ, отличнă вĕренме пултараймаççĕ,—тесе сÿпĕлтетеççĕ. Çапла вĕсем йатарласах буржуалă националиссен çĕрĕк теорине сараççĕ. Вĕсем çак теорипе хăйсен тăшманла ĕçĕçене, вĕренÿпе воспитани ĕçĕнче хăйсем кÿнĕ сăтăрсене хуплама пăхаççĕ.

Пирĕн вĕренекенсем вĕренме пултараççĕ çеç те мар, вĕсем пурте вĕренÿри отличниксемпе ударниксем пулмала. Анчах вĕсене Патăрйеленчи педучилищăра вĕренме тăшмансем чăрмантарса пынă, халĕ те чăрмантараççĕ.

Кунта вĕренекенсенчен нумайĕшĕ 7 уйăх таран стипендисĕр вĕренеççĕ. Иккĕмĕш курсра вĕренекен 149 ача 5 уйăх, виççĕмĕш курсрисем 3 уйăх хушши стипенди илмен. Вĕренекенсем тÿсме çук начар условисенче пурăнаççĕ. Уйрăм хватерсенче пурăнакансене хватер укçи тÿлеместĕр тесе, хĕл кунĕнче урама хăваласçĕ.

Меншĕн кун пек? Меншĕн тесен, халăх тăшманĕ Иритков, директăрта ĕçленĕ чухне, стипенди укçине 11 пин тенке йахăн хăй çумне чикнĕ. Хăйĕн ирсĕр ĕçне шăлса лартас майпа Иритков Патăрйел районĕнче следовател пулса ĕçленĕ Зайкова (халĕ Турхан районĕнчи прокурор) 200 тенкĕ, Чăваш Çутĕç Халăх Комиссариачĕн ревизорне Семйонова 300 тенкĕ тыттарнă. Зайковпа Семйонов халăх тăшманĕпе килĕшсе, пĕрле ĕçсе, вĕсенчен взйаткă илсе ку сăтăрла ĕçе пуçĕпех шăлса хураççĕ. Кун хыççăн, Педучилищăри „пуçлăхсем" стипенди укçине каллех 10 пин тенкĕ хуçалăх расхутне йараççĕ.

Ирикова директортан кăларсан, ун вырăнне полицейски ывăлĕ Соколов кĕрет. Вăл хăйĕн ĕçне тума педучилищă пурнăçне йусассинчен мар, тăшмансене пулăшассинчен тытăнать. Соколов чи малтанах хăйĕн тусне Ирикова 2 пин тенкĕ ытла темĕнле „ĕç укçи" тыттарнă. Иритков директортан тухса ÿксен те, темĕн сăлтавпа 7 кун хушши педучилищăн пичетне, машинкине хăй аллинче тытса усрать.

Соколов йăла тĕлешĕнчен пăсăхса кайнă, етем сăн-питне çухатнă çын. Завуч пулнă Самайловпа Иритков патĕнче Соколов çĕрĕçĕрĕпе ĕçнĕ. Çак тăшмансемпе вăл халĕ те çыхăну тытать.

Соколов хÿтĕленипе педучилищăра халĕ те тăшмансем пурăнççĕ. Шура бандит пулнă Йакименко, „тивĕçлĕ работник" шутĕнче тăрать. Çак Йакименко колчак çарĕнче тăрса, Хĕрлĕ çара хирĕç, Совет влаçне хирĕç кĕрешнĕ. Вăл 1930 çулта партине улталаса парти ĕретне хĕсĕнсе кĕнĕ. Анчах ăна часах паллаласа илсе, çийĕнчех кăларса çапаççĕ. Кун хыççăн, Йакименкона Осоавиахим совечĕн председателĕ пулнă халăх тăшманĕ Йермаков Чăваш республикине илсе килет. Йермаков хăйĕн йĕкĕтне Патăрйел районĕнчи Осоавиахим Совечĕн председателне лартать. Халăх тăшманĕ лартнă тăшман шурă бандид Осоавиахим ĕçне часах йухăнтарса йарать. Колхозсенчи Осоавиахим организацийĕсене салатса пĕтерет. Йулашкинчен районри советăн хуçалăхне лаши мĕнĕпех сутса ĕçсе пĕтерет. Иритков çак тăшмана педучилищăна çар ĕçне вĕрентме илет, унтан завхоз туса хурать. Ирсĕр çын кунĕн-çĕрĕн ĕçсе кунти ĕçе те йухăнтарса йарать. Вĕренекенсене çар ĕçне халăх тăшманĕсен кĕнекисем тăрăх „вĕрентет". Çак тăшмана Соколов,—„ĕçе йухăнтарнăшăн",—тĕсе ĕçрен хăтарам пекки тăвать. Анчах профсойуз членĕсен пухуĕнче полицейски ывăлĕ Соколов, ес-ĕр ачи Кузнецов хÿтĕленипе Йакименкона профсойуз членĕнчех хăвараççĕ.

Пулас учителсене пуп, ес-ер, диакăн, полицейски тавраш ĕсем, тăшмансемпе çыхăнса кайнăскерсем, „воспитани" панине пула кунта вĕренекенсенчен хăшпĕр студентсем халăх хушшинче совет влаçне хирĕç тĕрлĕ елексем сарма тытăннă: Владимиров, Старый, Матвейев, Маруков тата ытти те.

Педучилищăра халĕ пуçпулса тăракан Соколовсем, Кузнецовсем, Йевлампйевсем самокритикăна путарса пыраççĕ. Соколовăн сийенлĕ ĕçĕсем çинчен критиклекене Соколов тепĕр кунех канцелъарине чĕнтерсе, хытă йатлать, стипенди укçисене чакарать (тĕслĕх Воробйов).

Андрийанов преподавател буржуалă националиссен çулйĕртÿçи пулнă Елмене халĕ те „чăн—чăн большевик пулнă" тесе каласса çÿрет. Кунтах преподавателсем пулса ес-ер ывăлĕсем Пуйровпа Кузнецов ĕçлеççĕ. Петровăн ашшĕ 1918 çулта ес-ерсен ушкăнĕнче тăнă. 1929 çулта партине хирĕç, тырă хатĕрлессине хирĕç кĕрешнĕшĕн судпа айăпланнă. Кузнецова халăх тăшманĕсемпе (Маслов, Йакименко т. ыт.) çыхланса кайса вĕсене хÿтĕлесе тăнăшăн комсомол организацийĕ комсомолран кăларса ывăтрĕ. Анчах Соколов, „Кузнецова тепĕр хут комсомола илтерĕтĕп, есĕр ăна комсомолтан кăларса перегиб тунă",—тесе сÿпĕлтетсе çÿрет, Кузнецова халĕ те педучилищăрах тытать, ăна истори предмечĕ шанса парать.

Соколов завхозран кăларнă Йакименко вырăнне татах кулак ывăлне Баторшина илчĕ. Кунтах йаланах ĕçсе, халăх хушшинче хулиганла ĕçсем туса çÿрекен Йакушевпа йединоличник-сектант хĕрĕ Памбина текенскерсем те учителре тăраççĕ.

Вĕренÿ çулĕ пуçланас умĕн Соколов, педучилищăн вăхăтлăх директăрĕ пулса ĕçленĕ чухне, халăх тăшманĕсемпе çыхăнса кайнă Ухсайа та Çутĕç Комиссариачĕн путовкисĕрех педучилищăна вырнаçтарать.

Патăрйеленчи педучилищăра халăх тăшманĕсемпе вĕсен агенчĕсем сăтăрла ĕçсем туса пыни çинчен районри çутĕç пайĕпе Çутĕç Халăх Комиссариатĕнче ĕçлекенсем лайăх пĕлеççĕ.

Вĕренекенсем училищăри лару-тăрусем çинчен сахал мар сигналсем панă. Анчах ĕçре нимĕнле улшăну та çук.

Педучилищăри тăшмансемпе вĕсене хÿтĕлекенсене (Соколов, Кузнецов, Петров, Йегоров т. ыт. те) педучилищăра вырăн пулмалла мар.

Ф. Майков. Ник. Пушкин

Осоавиахим ĕçне пĕтерсе лартрĕç

ШĂХАСАН. Йамашри „Ударник" колхоз çумĕнче Осоавиахим пуçламĕш организацийĕ (организаторĕ П. Илйин) уçначчĕ. Анчах ĕç вырăнтан тапранмарĕ. Ку тарана çитсе те, Илйин çамрăксемпе колхозниксене Осоавиахим организаци çĕршыв оборонинне тĕреклетес ĕçре мĕнле выран йышăнса тăни çинчен ăнлантарса паман.

Осоавиахим организацийĕн пĕчĕк калипарлă винтовкăсемпе противогазсем, патронсем пур, анчах Илйин вăл патронĕсене йалтах хăй персе пĕтернĕ. Ку ĕç çинчен Шăхасан районĕнчи Осоавиахим совечĕ пĕлсе тăрать, çапах та Илйина йĕркене кĕртме шутламасть, Райсовет работникĕсем йалсене тухса та курмаççĕ.

Ал. Иванов.

Расратчиксем йăва çавăрнă

Октăбĕрĕн 15-мĕшĕнче тухнă „Чăваш Коммунĕ" хаçатра Карайри (Трак р.) чăпта çапакан ертелри ирсĕрлĕхсем çинчен çырнăччĕ. Кун хыççăн ревизи туни тата та нумай ирсĕрлĕхсене тăрă шыв çине кăларма май пачĕ. Ертел правленинче растратчиксем йăва çавăрнă. Акă фактсем: ертел правлени председателĕ И. Тыньаков 290 тенкĕ растратă тунă. Унăн кăмăлне пула ытти работниксем те ертел укçи-тенкине нумай салатнă. Бригадир А. Алексейев 1.641 тенкĕ, правлени председателĕн заместителĕ А. Алексейев 400 тенкĕ, Филиппов 1548 тенкĕ, Фомин 1057 тенкĕ растратă тунă.

Çав çынсене Тыньаков халĕ те ертелтех тытса усрать. Вĕсенчен укçа шыраса илес тĕлĕшпе ĕçе йурийех вăрăма чăсса пырать. Вăл çеç мар-ха. Тыньаков ертел укçитенкине членсемпе килĕшмесĕр салатать. Канаша чăпта леçнĕшĕн колхозниксене 40-шер тенкĕ тÿлекĕ вăхăтрах хăйпе лайăх пурăнакан йединоличниксене 50-шер тенкĕ тÿлет. Кун çинчен правлени членĕсем пурте пĕлеççĕ. Анчах вĕсем пĕр-пĕрин айăпне пытарса кăна пыраççĕ.

И. Петров.

ЗАЩИТА ОТЕЧЕСТВА ЕСТЬ СВЯЩЕННЫЙ ДОЛГ КАЖДОГО ГРАЖДАНИНА СССР

ССРС Аслă Советне суйлавă тĕле Е. Першковпа В. Грйунгалъ художниксен ИЗОГИЗ кăларнă плакачĕ.

Сойузфото репродукцийĕ.

Украинă халăхĕн савăнăçĕ

КИЙЕВ, декабрĕн 15-мĕшĕ. Совет Украинин столицинчи—Киĕв хулинчи ĕçсыннисем, ССР Союзĕн Аслă Совет суйлавĕнче коммунистсемпе партире тăманнисен блокĕ чаплă çĕнтерү тунипе савăнса, декабрĕн 15-мĕшĕнче хăватлă демонстраци туса ирттерĕç.

Кăнтăрлахи сменăри ĕçрен тухсан, хулан пĕтĕм кĕтесĕсенчен, аслă урамсем тăрăх демонстрантсен колоннисем йăлавсемпе, транспарантсемпе, пĕтĕм халăх суйланă Аслă Совет депутачĕн—Сталин йултăшăн тата унăн çывăх соратникесен—Молотов, Калинин, Кагановичăн, Ворошилов, Жданов, Косиор, Йежов йултăшсен портречĕсемпе пухăнма пуçланă.

Питĕ хытă савăнат телейлĕ Украинă халăхĕ. Хаваслă йурăсем Сталинла Конституципе тата ăна туса парăкан аслă Сталина мухтаççĕ.

Правительствă трибуни çинче—Украинă партийĕпе правительствă руководителĕсем, ССР Союзĕн Аслă Совет депутачĕсем,—Косиор, Петровский, Лепвленский, Сухомлин, Йевтушенко, Марчак, Богомолец, Гуçатникова, Голиков Усенко йултăшсем.

Оркестр сасси йанраса кайат. Сарлака проспект тăрăх демонстрацие уçса, Сталинскипе Ленински районсенчи ĕçсынисем пыраççĕ.

Малта—знаменосецсен колонни.

„Сывă пултăр пирĕн аслă та ăслă сулпуç Сталин йултăш", „Сывă пултăр ССР Союзĕн Аслă Совечĕ", „Сывă пултăр коммунистсемпе партире тăманнисен çĕнтерÿлĕ блокĕ"—çакăн пек йанăраççĕ лозунгсем.

„Ленинская кузница" завод рабочийĕсен колоннинчен ачасен ушкăнĕ уйрăлса тăнă. Вăл ушкăн Аслă Совет депутачĕсене пысăк чĕрĕ чечек сыххисем парат.

Служащисем, аслăлăх работникĕсем, артиссем, студентсем пыраççĕ.

— Большевикла сыхăлăха тата ытларах ÿстерер, фашисăм агенчĕсене, шпионсене, троцкисла-бухаринла тасамарлăха вĕçне çитиччех тĕпĕ-тымарĕпех тăпалтарас!—чĕнеççĕ лозунгсем.

Рабочисемпе Хресченсен мухтавлă Хĕрлĕ Çарĕн чаçĕсем иртеççĕ. Коммунистсемпе партире тăманнисен блокĕн çĕнтерÿ йачĕпе, ССР Союзĕн Аслă Совечĕ йачĕпе, Аслă Сталин йачĕ çе çĕнĕрен хăватлă „ура" кăшкăраççĕ.

Суйлавçĕсем трибунă çинче тăракан хăйсен депутачĕсене ăшă кăмăлпа саламлаççĕ.

Совет халăхĕн чи хăватлă пĕрлĕхĕн, коммунистсен партине чĕрери йуратнине, Сталинла Тĕп Комитет тавра, ĕçсыннисен çулпуçĕ тата учителĕ Сталин йултăш тавра пĕтĕçнине чаплă демонстрацине 300 пин çын хутшăннă.

(ТАСС)

„Ленин Октăберте" фильмăн пысăк çитĕнÿвĕ

Совет кинематографийĕ чаплă çĕнĕ çĕнтерÿ тунă. Çĕршывăн екранĕсем çинче историлĕ-революцилĕ „Ленин Октăберте" йатлă чаплă фильм кăтартма пуçланă. Фильм Ленинпа Сталин йĕртсе пыракан большевиксен партийĕ тата рабочи клас 1917 çулхи Октăберти Социализмла Аслă революцийĕ мĕне хатĕрленнине уçă та илемлĕ формăпа хумхантармала каласа парат.

Илйич Петроградa килсен вăл Сталинпа тĕл пулни, Смольнăйра Ленина хавасланса кĕтсе илни, Зимний дворецa штурмлани,—çак ĕçсемпе ытти ĕçсем...

Каменевпа Зиновйев Октăберти хăçпăшалла восстани тумалли плана буржуазине уçса парса сутăнни Ленина çав тери хытă тарăхтарнине фильм уççăн кă артса парат.

Халăх фильма питĕ хытă мухтат. Мускаври кинотеатăрсем тулиех пулнă. Чылай билетсене организацисен коллективпа ултăсакăр кун малтан илсе хунă.

Çак чаплă кино произведенин ÿкерчĕксене пĕтĕм çĕршывĕпех йарса параççĕ. Чаплă фильма мĕлйуншар совет гражданĕсем курĕç.

(ТАСС)

Паттăрла вилнĕ Штепенко матросăн ÿтне ССР Союзне йанă

АФИНЫ, декабрĕн 14-мĕшĕ (ТАСС). „Благойев" совет пароходне фашисла пиратсем путарнă чухне паттăрла вилнĕ Петр Штепенко матрос-орденоносец ÿтне декабрĕн 14-мĕшĕнче Пирей гаванĕнчен (Афины çывăхĕнче) „Франц Меринг" параходпа ССР Союзне йанă. Штепенко ÿтне ăсатма порта Грецири совет колонийĕ тата унта тăракан „Менжинский" пароход моракĕсем пухăннă.

„Франц Меринг" параход Одессăна декабрĕн 19-мĕшĕнче çитет.

Барселонăра фашисла террор тăвакансен ĕçĕ тăрăх йышăннă приговор

ПАРИЖ, декабрĕн 13-мĕш (ТАСС). Барселонăран Гавас агенстви пĕлтернĕ тăрăх, шпионла ĕççене пăхса тухакан трибунал Барселонăри кассацилĕ трибунал председателĕ Хове Андреуна кăçалхи августăн 2-мĕшĕнче вĕлерме тăнă ĕçе пăхса тухнă. Трибунал Давид Гарси Алтимира, Хозе Вильдрага тата Монон Франсуа Порраса 15,10 тата 6 çуллăха тĕрмере хупса усрамала приговор йышăннă.

* * *

Пĕчĕк фелйетон

Йăлана кĕрсе çитнисем

Йăла пирки каласас тетпĕр пулсан, кĕскен çапла калама пултаратпăр. Йăласăр çын вăл çукрах. Малтанах илсен, пĕри пур вара, килĕнчен тухса кайсанах çемйе хушшинчи калаçусене сарма пуçлат. Тепри тата йăланах тĕрлĕрен организацисен пухуĕсенче çÿрет те, унта мĕн калаçнисене çинчен каласа пама тытăнат. Хăй шучĕпе вăл питĕ нумай пĕлет, нумай калаçма йуратат. Çавăнпа ун тавра кăткă пек халăх йăванат.

— Ну, Петр Григорч, ĕнер ăçта пултăн? Мĕн пулса иртрĕ? Мĕн пирки ытларах калаçу пычĕ? Петр Григорч пĕтĕмпех ответ парат. Служба вăртăнлăхĕ-и вăл, ăна тытса тамаст. Весĕм çинчен каласа памасăр унăн чăтаймаст унăн. Вăл унăн йăлана кĕрсе çитрĕ.

Редушкин йултăшăн тепĕр йăла йулашкинчен унăн йăли йуратнă специальносе пулса тăчĕ. Ман Хирлепри (Варнар р.) „Строитель" колхоз председателĕнче ĕçлеме тытăнсан, унăн ăратлă йăрсемпе чупас йăла пулсанах кайрĕ. Чупат пирĕн Редушкин! Пуçĕ те унăн хĕрнкĕ.

— Ех! — тет те пĕрре, айăр тапăр-тапăрах вырантан хускалса кайат. Кайат вара, пĕр самантрах курăнми пулат. Çăварлăх тапа, тилхепине туртăнтарса тытнă.

Кунта инмĕнле хăрушлăх та çукха. Айăр лашах чупат. Вăл вăрăм çула та кĕске вăхăтра çитерет.

Айăра ним шеллемесĕр чупарчĕ. Айăр вилчĕ. Тепĕр лаша ÿсерпе çухатрĕ. Унăн шăлнĕ, Никандор Порфирйĕв, тепĕр лашине кĕпер айне йарса вĕлерчĕ. Ку йтрĕ Редушкинçĕн йăлисем. Урăх никамăн та мар.

Хулентерех. Редушкин арăмĕ (тел вара, вăрă йăлана хрăмĕн йат-не пĕлместпĕр) фермăна çу вăрламан пырат. Питĕ йăпшанса утат.

— Брис!

Хăрамаст апла. Кушак мар. Унтан та чиперехсĕр вăл. 23,6 килограм çăва йăпăлка чĕлхепе çулласа тухрĕ.

Сывăрат, мĕн, фермă пуçлăхĕ. Курнине курман туни авантарах та, тет, пулмала.

Редушкин сутă та тума пултаракан çын пулчĕ иккен. Çĕнĕ йăла. Кирпĕчĕ сутти пуçланат. Пурне те вĕренет ку Редушкин. Колхозăн 15 шер тенкĕпе сутмăли кирпĕчне 20 шер тенке сутат. Тупăшĕ, астăвăр вара, колхоза мар, Редушкин кĕсйине кĕрет.

Редушкин ревизи йĕнĕпе йăлине тăвас, терĕ. Ан шавлăр, ытла ан калаçса çÿрĕр, колхозри ревизи комиссийĕ сывăрат-ха. Весĕм вырăнне Редушкин ÿрĕк-сÿрĕк çынсене тата кулак ывăлĕсене пухса ревизи тутарат. Паллах, мĕнле „ревизи"—калаймăпăр.

Чарăнăр-ха, мĕн кăшкăрни илтĕнет вара. Ахăр мар. Тахăшĕ кравул кăшкăрат. Редушкин йăлийех ку та. Колхозниксене хĕнет.

Икĕ çул хушшинче 8 колхозника хĕнерĕ. Краву! Арамĕ унăн хăйен сыптăм алли вырăнне шутланат. Йытă пек пĕрре ĕшкĕртсе йарсан, лекнĕ таллаза та тăкат. Кĕç Гаврилов, кĕç Максимов краву кăшкăрни илтĕнет. Кĕç Варламова кăшкăрма пуçлат.

Краву кăшкăраççĕ. Ана халăх сучĕ илтмест. Илтĕнмест пулмала çав, чанах та. Весĕм çинчен тахçан суда панă. Суд пăхса тухмаст. Ĕç пĕтсе, пĕтсе, пĕтсе пырат. Халăх сучĕн те ку йăлана кĕчĕ.

Ив. Мосейев.

Китайри çамрăк боец постра (Шанхай). (Союзфото).

Китайри вăрçă

Китай çарĕсем питĕ хытă хирĕç тăна пулин те, йапониçсене Нанкин патĕнчи Китай позицисене татса тухса, хулана кĕме май килнĕ.

Китай сведенийĕсем тăрăх, Йапони çарĕ йулашки кунсем хушшинче Нанкин патĕнче 6 пин çынран кайа мар çухатнă.

Йапони авиацийĕ Китай хулисемпе йалĕсем çине тискеррĕн бомбăсем пăрахнипе Китай халăхĕн пысăк масси пурлăхĕ сурт-йĕрсĕр, апат-çимĕçсĕр, ĕçсĕр тăрса йулнă. Пĕр Шанхай хулинче кăна çĕршер пин ĕçсыннисем нимсĕр-мĕнсĕр тăрса йулнă. Йапониçсем фабрикесемпе-заводсене çĕмĕрсе тăкнипе 150 пин çын ытла ĕççĕр тăрса йулнă.

Йапониçсен, хăйсем тытса илнĕ Çурçĕр китайри районсенчи вăрахуурахла политики пĕтĕм Китай халăхне тарăхтарат. Кунта çимĕç тĕлĕшпе пурнăç питĕ йăвăрланнă, мĕншĕн тесен йапониçсем китаиçсен хатĕрленĕ çимĕçсене çаратса, Йапоние йăраççĕ. Китай хресченĕсем йапониçсем валли апат тăратассипе хирĕç пыраççĕ. „Пур аслă, вăтам, тата пуçламăш шкулсене те пекех хупнă, тата ытларах, йапониçсем нумай шкулсене йурийех çĕмĕрсе пĕтернĕ.

(ТАСС).

Чан Кай-ши зайавленийĕ

Китайра Китай правительствин пуçлăхĕ Чан Кай-ши зайавленине пичетлесе кăларнă, ăна полевой штабран редио тăрса панă.

„Нанкинран чакни,—тенĕ зайавленире,—Китай правительствин Йапони агресçипе вĕçне çитиччех хирĕç тăмалли пуçламăш политикине сиенлемест. Вăл хамăр керешĕве малала тăсма йышăннине çирĕплетет çеç. Правительствă Нанкинран куçнă хыççăн, Нанкин политикăпа вăрçă тĕлĕшĕнче пĕлтерĕшлĕ вырăн та йышăнса тăмаст. Епĕ хамăн çарсене, хамăн чакмали планпа, килĕшсе, тăшман чаплă хĕçпăшалланни ытларах пысăк çухатусем тумали вăхăтра урăх лини çине куçма хушрăм".

* * *

Дирекци рабочисем çинчен маннă

Шупашкарти 1-мĕш номĕрлĕ типографипе виççĕре йахăн рабочи ĕçлет. Весĕм хушшинче çĕ нормине кулленех ытлашши тултарса пыракансем сахал мар. Анчах дирекци ĕçри условисем çинчен пачах манса кайнă.

Цехсенче йăланах тасамарлăх. Талăкра пĕрре йачĕшĕн çеç шăлкаласа кайнипе урайĕнчен сÿ çала татăлмаст. Вентиляци нихăçан та ĕçлемест.

Чылайчен бакри шыва ĕçме курка памасăр аптратаççĕ, йулашки вăхăтра—шыв та çук. Рабочисен таса мар савăт-сапасемпех водопроводран шыв ĕçеççĕ.

Рабочисене кашни ултă уйăх хушшинче спецовка памала, анчах иртнĕ çултанăк хушшинче вĕсене пĕрре те паман-ха. Çавăна супакăрте çук. Рабочисем килĕсене те краскăсемпех варланса кайаççĕ. Умывальник патĕнчи алшали, уйăхранпа çумансăр, сăран тĕслĕ пулса кайнă.

Çĕнĕ кадрсем ÿстерес ĕç питех те йапăх. Техникăна лайăх пĕлекен кадрсем çукранах линотипмашинисен еретрен тухрĕç. Линотип инструктăрне ĕçсе çÿренĕшĕн пысăк укçа парса тăнипех çĕнĕ кадрсене çитĕнеççĕ, тесе шутлат пулмала дирекци. Ученикçсен хисепĕ сахал мар, анчах весене никам та вĕрентмест. Çĕнĕ кадрсем çитĕнтерменрен хăçат кăларакан, цехра алăпа лайăх набор тăвакансем икĕ-виçĕ çын çеç тăрса йулчĕç ĕнтĕ.

Ĕçуксине пур çĕрте те ĕçпахалăхĕ тăрса параççĕ. Анчах типографи директорийĕнчи работниксем хăйлечен те çакна пурнăçа кĕртменха. Ĕçуксине пахалăх тăрăх паманнипе йулашки вăхăтра ĕç пахалăхĕ те уйрăмăнах начарланчĕ.

Цехсенче директорăпа цех начальникĕсене хăналăха çеç курма пулат, ăна та цехра икĕ-виçĕ рабочи йулнă вăхăтра çеç. Цехсене хăналăха çеç пулнăран ĕнтĕ весĕм шыв валли хатĕрленĕ бак çине „бак без воды" тесе çырса çапнине те курмаççĕ.

Рабочисен ĕç условине лайăхлатассине хаклама пăхманшăн директорине ĕçлекенсене вĕренес пулат.

К. Микулин.

Клас тăшманĕсен ирсĕр ĕçĕ

ЙĔПРЕÇ. Тури Клемкасси йалсоветне кĕрекен Анат Клемкасси йалĕнчи А. Скворцовпа С. Григорйев час-часах хулиганла ĕçсем туса çÿреççĕ. Весĕм иртĕнсе кайнă хулиганĕсене никам та чарекан пулман. Йал çыннисен весенчен хăраса çеç пурăннă. Декабрĕн 7-мĕшĕнче Скорцовпа Григорйев совета хирĕçле ирсĕр ĕç тунă: ССР Союзĕн Аслă Советне депутата суйлама тăратнă кандидатсен сăнĕсене—йал хушшине çыпăçтарнă плакатсене весем пĕтĕмпех чĕрĕ-чĕрĕ пăрахнă.

Клас тăшманĕсене аресçсе суд пуличчен хупса лартнă.

А. Павлов.

* * *

Канашра „Айдар" вылйарĕç

КАНАШ. Декабрĕн 9—10-мĕшĕнче Канашри культурă сурчĕнче Йĕтĕрнери 3-мĕш колхоз театрĕ Осипов драматург çырнă „Айдар" драмине вылйаса пачĕ. Спектаклăр курма икĕ кун хушшинче те питĕ нумай халăх пухăннă. „Айдар" драмăра артиссем Сентийер, Айдар, Пинерпи тата Ахтупай ролĕсене уйрăмăнах аван вылйарĕç.

Куракансене „Айдар" драмă питĕ килешрĕ.

Дм. Иванов.

Колхозсемпе бригадăсенчи стена хаçат редакторĕсен заочнăй курсне организацилесси çинчен

Иртнĕ çулсенчи пекех, кăçал та райхаçатсем колхозсемпе бригадăсенчи стена хаçат редакторĕсен тата активлă йалкорсен харпăрхăй тĕллĕн вĕренмели курсне организацилеççĕ.

Камсене илмеле-ха колхозсемпе бригадăсенчи стена хаçат редакторĕсен харпăрхăй тĕллĕн вĕренмели курсне?

Чи малтанах колхозсемпе бригадăсенчи стена хаçат редакторĕсене, редколлеги членĕсене, стена хаçатĕнче активлă хутшăнса ĕçлекен йалкорсене, колхозсенчи йатлă çынсене—стахановецсене, ударниксене, ССР Союзĕн Аслă Советне депутатсем суйлама хатĕрленес ĕçре хăйсен политикăла активлăхне кăтартнă стена хаçачĕсене çыхăнса ĕçлекен колхозниксене илмеле. Вĕренÿ çне уйрăмăнах колхозницă-стахановецсене, звеновойсене, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес çĕрте ĕçлекен колхозницăсене активлăн хутшăнтармала.

Курса вĕренме илнĕ чух уйрăмăнах çакнă çын шута илмеле: курса илес çынна çын вĕренме шутлани, хаçат ĕçĕ интереслентерети, ăна, стена хаçатĕнче ĕçлеме пулатни вăл тата ыт. те. Çакна питех те шута илме кирлĕ.

Хăшпĕр райхаçатсем заочниксен курсне райхаçата çырса тăракансене пурне те, малтан вĕсемпе ним калаçса пăхмасăрах, курса илес тенĕ кандидатурăсене малтан колхозри обшчăлă организацисемпе пĕрле сÿтсе йавмасăрах илсе тултараççĕ. Çапла тунипе вара нумай йалкорсем хăйсене заочниксен курсне илнине те пĕлмен. Паллах, çакăн хыççăн вĕренÿ ĕçĕ лайăх пулса пыма пултараймаст, заочниксем хăйсем те вĕрену ĕçĕ çине тимлĕн пăхмаççĕ. Кăçалхи çул заочниксен курсне „куртăмăн" илес йурăхсăр методa пачах тĕп тумала. Курса пĕччеленшерĕн, çынăн вĕренме шухаш пурринe тĕплĕн шута илсе суйласа илмеле.

Çитменнине тата хăшпĕр редакцисем иртнĕ çулта заочниксен курсне шкулта вĕренекен, питех те çамрăк ачасене илсе тултарнисем те пулчĕç. Кун пек составпа стена хаçат редакторĕсене çителĕклĕ тарăн авторитетлă çынсенчен хатĕрлеме çук.

Заочниксем сахалран та тăватă султан кайа мар вĕреннисем пулмала. Групăра çырув начар пĕлекенсем пулсан, вĕсем заняцисене чăрмантарса пыраççĕ, ытти заочниксене хăвăртран малала вĕренсе пырассине чăрмантараççĕ.

Çавăнпа та заочниксен составĕ пĕлÿ тĕлĕшĕнчен пĕрпекех пулсан лайăх пулат. Алла туни программăри темăсене (лекцисене) вăхăтра вĕренсе пыма май парат. Заочниксем районĕ те пĕр 30—50-çын пулсан çитет. Консультацисем пама вĕсене кустсене уйăрас пулат. Консультацисем пама малтанах çирĕп план туса хумала. Плана районра миçе заочник пуррине, тата консультаци пунктне ăçта тусан вĕренекенсемшĕн çÿреме лайăх пуллине, заочниксене вĕрентме ăçта вăйсем çителĕклĕ пуррине тĕплĕн шута илсе тумала.

Заочниксен курсне вĕренме илес ĕçе колхозсенчи партипе комсомол тата обшчăлă организацисене, çавăн пекех колхозниксен аслă массисене активлăн хутшăнтармала. Партипе комсомол организацисен районри хаçат заочниксен курсне шанчăклă, политикă тĕлĕшĕнчен çирĕп шухăшлă çынсене, партипе совет влаçĕ çине пĕтĕм вăйпе хурса ĕçлекен çынсене суйласа илме пысăккăн пулăшмала.

Заочниксен курсне илес ĕçе 1938 çулхи йанварĕн 10-мĕш тĕлне пĕтĕмпех туса çитермеле. Йанварĕн 15-мĕшĕ тĕлне заочниксен списокне „Крестьянская газета" çумĕнчи заочниксен курсĕн дирекцине çитермеле.

Тÿрлетни

„Чăваш Коммунĕ" хаçатăн декабрĕн 14-мĕшĕнче тухнă 286-ш номерĕнче „Халăх тăшманĕсене тивĕçлĕ наказани пачĕç" йатлă статйара судпа айăпланă Спиридонов, Михопаркин, Шулов тата Павлов пирки Уголовлă Кодексăн статйисене тĕрĕс кăтартман. Уголовлă Кодексăн 57—7-мĕшпе 58—11-мĕш статйисем тăрах..." тесе пичетленнине: „УГОЛОВЛА КОДЕКСАН 58—7-МĔШПЕ 58—11-МĔШ СТАТЙИСЕМ ТĂРĂХ..." тесе тÿрлетсе вулмала.

Суриков пирки Уголовлă Кодексăн 58—7-мĕш статйин 1-мĕш пайĕ вырăнне: УГОЛОВЛА КОДЕКСАН 58—10-МĔШ СТАТЙИН 1-МĔШ ПАЙĔ, тесе вуламала.

Ответлă редактăр заместителĕ И. П. ПАВЛОВ—ПИНЕР.

ЧĂВАШМЕЛЬТРЕСТА

трест аппаратĕнче тата предприйатисенче ĕçлеме кирлĕ:

Стажлă механиксем тата машинистсем
Економист-плановик
Квалификацилĕ мельниксем тата кĕрпе çуракансем
Бухгалтерсемпе очетоводсем
Бухгалтер-ревизор.

Çак адреспе пымала: Шупашкар, Урицки урамĕ 13. Телефон № 2—16. 5—1

Пурне те пĕлтерме

Кашни килсуртрах пĕчĕк кĕленчесем, банкăсем тата емел тыткалана пĕчĕк савăт-сапасем пур. Çав хăвăра кирлĕ мар савăт-сапасене пĕтĕмпех пухăр та, сывăхри аптекăна йе аптекă магазинне леçсе парăр.

Чăвашаптекоуправленин ПУР АПТЕКИСЕМ те тата „САНГИГИЙЕНА" МАГАЗИНĔСЕМ те хăвăртан емел тыткаламалли кĕленчесемпе тата тĕрлĕ савăт-сапасем СУТĂН ИЛЕÇÇĔ.

Ухсине çавăнтах тÿлеççĕ. Чăвашаптекоуправлени.

Шупашкар хулинчи тата районĕнчи пур учреждениесемпе организацисене

1938 çулта 1-мĕш квартăлта ĕç укçи мĕн чухлĕ тÿлемели фондне районпа планне декабрĕн 20-мĕшне № 30 формăпа Государствă банкне тăратмала.

Пĕр хутлăха спецфондсенчен памали премисене тата тĕрлĕрен шкулсен стипендисене уйрăм кăтартмала.

Государствă банкĕ.

КОГИЗ-ăн „Чăваш республикинчи уйрăмĕ

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕн 1932 çулхи октăбрĕн 17 мĕшĕнче йышăннă 1591-мĕш №-лĕ постановленипе пăхса, литературăпа канцелярăн таварĕсем илме пирĕн пата аванс хывнă мĕн пур учрежденисемпе организацисене çакăн çинчен асăрхаттарат: аванса кайала тавăрса илме йе тавар илме декабрĕн 27-мĕшĕнчен кайа йулмасăр КОГИЗ-а претензи памала, претензипе пĕрле хывнă аванс укçипен тавар илмен суммине кăтартакан выписка тăратмала.

Кăтартнă срук хыççăн нимĕнле претензи те йышăнмастпăр.

КОГИЗ-ăн Чăваш республикинчи уйрăмĕ.

Чăвашснабсбытăн Транспорт кантурне

вăхăтлăх ĕçлеме 1 бухгалтер йалан ĕçлеме 1 бухгалтер

КИРЛĔ.

Ĕçукси государствă нормированнийĕ тăрăх. 3—2

75087 №-лĕ лаша паспорчĕ

Шупашкар районĕнчи Протопоп йалсоветĕнчи А. Кузмин йачĕпе 1936 çулхи февралĕн 23-мĕшĕнче панăскерне

Сухалнă пирки

пăрахăра тухнă тесе шутламала.

Шупашкарти „Художник" артелне йалан ĕçлеме

Бухгалтер-производственник тата завхоз-кладовщик

КИРЛЕ

Ĕçукси килĕшÿ тăрăх. Çак адреспе пымала: Шупашкар, Роза Люксембург урамĕ, 5-мĕш (б) № сурт. 2—1

„Чăваш Коммунĕ" çырăнса илмелли хакĕсем: 12 уйăха—30 т., 6 уйăха—15 т., 3 уйăха—7 т. 50 пус, 1 уйăха—2 т. 50 пус. Авçырăнăсене кайала памаççĕ.

Уполномоченный Чувашглавлита № 965. Гор. Чебоксары, Типография № 2 Чувашполиграфтреста. Заказ № 2631. Тираж 13790. Ед—32 ок. 1—3 п. л.